Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ИЮЛЬ 30 КĔҪНЕРНИКУН 149 (4962) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш ҫул тухать — *ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕҫтăвкомăн хаҫачĕ* — Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—57, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн К—40, Дежурнăйĕн 6—23

Чăваш халăх депутачĕсем

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйланă. Коммуниссен партийĕ, партире тăманнисемпе пĕрле пĕр блок, союз туса, каллех тепĕр хут пысăкран та пысăк ҫĕнтерӳ турĕ. Ку вăл—социалисăмлă ҫĕршыври телейлĕ халăхăн чаплă ҫĕнтерĕвĕ. Влаҫăн аслă оргăнне—совет парламĕнтне халăх хăйĕн чи йуратнă, шанчăклă ывăл-хĕрĕсене, парти ĕҫĕшĕн пĕтĕм вăйхала, пĕтĕм пултарулăха хуракан, тăван ҫĕршывăн вăй-хăватне, тĕрекне ӳстерессишĕн, телейлĕ те савăнăҫлă пурнăҫшăн бољшевикла кĕрешекенсене суйларĕ.

Епĕр пайан Чăваш АССР Верховнăй Советне суйланă депутатсен спискине пичетлесе кăларатпăр. Чăваш АССР Верховнăй Советне 96 депутат суйланă. Чăваш халăхĕн депутачĕсен хисепĕнче—халăхăн йуратнă ҫулпуҫĕ, пирĕн атте, пирĕн сывăхран та ҫывăх тус, учител—Сталин йулташ. Аслă Сталин—халăхăн пĕрремĕш депутачĕ. Сталин—пирĕн мухтав, пирĕн ĕмĕт, пирĕн савăнăҫ, пирĕн хĕвел.

Сталин йулташпа пĕрле унăн чи ҫывăх соратникĕсене—партипе правителствă руководителĕсене В. М. Молăтăв, М. И. Калинин, Л. М. Каганович, К. Йе. Ворошилăв, А. А. Андрейĕв, А. И. Микойан, А. А. Жданăв, Н. И. Йежов йулташсене йуратса савăнса суйланă.

Халăх ҫак суйлава активлăн хутшăнса, вăл йаланах коммунисла партипе, Аслă Сталинпа пĕрле пулнине, унăн тавра нихҫанхинчен таччăн пĕтĕҫсе, пĕрлешсе тăнине, хăйĕн социалисăмлă тăван ҫĕршывне вĕҫĕмсĕр йуратнине уҫҫăн кăтартрĕ.

Партипе правителствăн руководителĕсемпе пĕрлех Верховнăй Совета халăхăн шанчăклă ывăл-хĕрĕсене, социалисăм строителствинче ĕҫлесе, халăх тăшманĕсемпе—ирсĕртен те ирсĕр бандăсемпе—троцкиссемпе, бухаринцăсемпе, буржуалă-националиссемпе хайаррăн кĕрешсе ҫирĕпленнĕ, партипе халăх ĕҫĕнче пиҫĕхнĕ ҫынсене суйланă.

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйланă депутатсем хушшинче коммуниссем 67 ҫын, партире тăманнисем—26, комсомолĕцсем 8, йе партире тăманнисем 33,4 процент. Депутатсем хушшинче хĕрарăмсем 26 ҫын. Наци тĕлĕшĕнчен илсен, депутатсем хушшинче 54 чăваш, 37 вырăс, 2 тутар, 1 йеврей, 1 армйан, 1 грузин.

Пирĕн депутатсем—социалисăм строителствин тĕрлĕ участкисенче ĕҫлекенсем. Вĕсем хушшинче партипе совет работникĕсем, хапрăк-савăтсенчи, уйхирсенчи паллă стахановĕцсем, трактăриссемпе комбайнерсем, звенйевойсем, бригадирсем, колхозсемпе йалсовет председателĕсем, агрономсем, вăйлă тырпул маҫтăрĕсем—орденоносĕцсем; кунтах искусствăпа наукă, ăслăлăх представителĕсем—учителсем, артиссем, инженерсем т. ыт. те.

Кирек мĕнле ĕҫре пулсан та, кирек ăҫта ĕҫлесен те вĕсем пĕр ĕмĕтпе, пĕр тĕллевлĕ пулса—коммунисла общĕствă тăвасшăн кĕрешсе, хăйсен кулленхи ĕҫĕнче партин тĕп ҫулйĕрне ҫирĕп тытса пынипе, тăван ҫĕршывăн ырлăхĕшĕн хастар ĕҫленипе халăх шанăҫне илме, чыслă та ответлă ĕҫе илме—халăхăн депутачĕсем пулма тивĕҫлĕ пулчĕҫ.

Акă пирĕн депутатсен сăн-сăпачĕсем: Ҫĕмĕрлери йăвăҫ каскалакан комбинатри работницăна-Каҫйанăвă Верăна пирĕн республикăра лайăх пĕлеҫҫĕ. Вăл паллă стахановкă. Ăна Совет влаҫĕ, Октябĕр революцийĕ пурнăҫ пачĕ. Революциччен вăл вĕренеймен те, кулаксем патĕнче чăпта ҫапса пурăннă.

1931 ҫултанпа Верă Каҫйанăвă Ҫĕмĕрле комбинатĕнче ĕҫлет. Ĕҫре вăл хăвăрт ӳссе пына. Халĕ Верă стољарнăй цехра чи паллă, хастар стахановкă. Кăҫал апрелĕн 8-мĕшĕнче пĕр смена нормине 557 процент, ҫав уйăхрах 29-мĕшĕнче—564 процента ҫитерне. Уйăх планне 200 процентран ытла тултарса пырать. Вăл халĕ Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ.

Шуршăл суйлав округĕнчи (Сĕнтĕрвăрри р.) суйлавҫăсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата—Урхас Кушкăри „Ҫăлтăр" колхоз председателне—Ҫтепан Йакăвлĕвич Йакăвлĕва суйларĕҫ. Вăл тырпул маҫтăрĕсенчен пĕри. Урхас Кушкăра халĕ мĕн пур хресчен хуҫалăхĕсенчен 98 процент колхозра тăрать.

Йакăвлĕв—колхозлă йал ҫитĕнтернĕ депутат. Ҫавăн пекех колхоз пурнăҫĕнче ӳссе ҫитĕннĕ Бычковă, Куликов, Родионăвă т. ыт. депутатсем те.

Рабочисемпе хресченсенчен тухнă совет интеллигенцийĕ хушшинче пултарулă, талантлă ҫамрăк ăстаҫсем ӳсрĕҫ. Совет интеллигенцийĕнчен Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланисен хисепĕнче епĕр Шупашкарти педагогикă институчĕн директăрĕ Харитонăв, учителницă Новикăвă, инженер Назарăв йулташсене куратпăр.

Совет республикĕн, совет халăхĕн депутачĕ пулни—калама ҫук хисеплĕ те ответлă ĕҫ. Депутатăн суйлавҫăсен умĕнче йаланах ответлă пулмала, унпа таччăн ҫыхăнмала, халăх шанăҫне хытă хакламала.

Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕ Фирсăвă Александрă ийунĕн 27-мĕшĕнче Куславкка суйлав округ комиҫҫийĕн ларăвĕнче мандат илнĕ чухне ҫапла каланă:

— Ирĕклĕ совет халăхĕн тарҫи, Верховнăй Совета халăх йанă посланĕц пулассипе—вăл пит те пысăк хисеп. Халăх шанăҫне епĕ Ленин—Сталин партишĕн чĕререн тăрса тӳррĕн, хамăн пĕтĕм вăйпа пĕлĕве хурса ĕҫленипе ответлĕп".

Депутат—совет ҫĕршывĕнче мухтавлă йат. Ҫак мухтавлă, хисеплĕ йата депутатăн халăх ĕҫĕшĕн, Ленин—Сталин парти ĕҫĕшĕн пĕтĕм вăйне хурса ĕҫленипе тӳрре кăлармала.

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйланă. Чăваш республикĕнчи ĕҫ ҫыннисем, унăн депутачĕсем хамăрăн социалисăмлă хуҫалăха малала вăйлатса, ордĕнлă республикăна малала чечеклентерсе пырассишĕн ҫĕнĕ вăйпа кĕрешĕҫ.

РСФСР Верховнăй Советне суйланин пĕтĕм итогĕсем ҫинчен Тĕп Суйлав Комиҫҫи пĕлтерни

РСФСР тăрăх РСФСР Верховнăй Советне суйламали суйлав участкисем 93.927, суйлав округĕсем 727.

Суйлавсем 1938 ҫулхи ийунĕн 26-мĕшĕнче ирхине 6 сехетрен пуҫласа ҫĕрлĕ 12 сехетчен пулса иртнĕ.

Ийунĕн 27-мĕшĕнче округсенчи суйлав комиҫҫисем ҫĕрле 12 сехет тĕлне 727 депутата пурне те РСФСР Верховнăй Советне суйланине регистрациленĕ.

Суйланă депутатсем пурте коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсем.

Тĕп Суйлав Комиҫҫи суйлав итогĕсене 727 суйлав округĕнчен пуринчен те илнĕ.

Сасăланă ҫĕре хутшăнnă суйлавҫăсен хисепне шута илсе тухасси, чи инҫетри хăшпĕр участкăсене кĕртмесен, тĕпрен илсен, пĕтнĕ.

РСФСР тăрăх РСФСР Верховнăй Совет суйлавĕнче саса правипе усă куракан суйлавҫăсем 60.368.858 ҫын регисрациленĕ. Сасăланин резултачĕсем ҫакна кăтартса пана: вĕсенчен 59.936.715 ҫын сасăланă, вăл суйлав правипе усă куракан гражданĕсен пĕтĕм хисепĕнчен 99,3 процент пулать.

РСФСР Верховнăй Советне суйламали суйлав округĕсенче пуринче те коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн 59.542.993 ҫын сасăланă, вăл сасăланисен пĕтĕм хисепĕнчен 99,3 процент пулать.

„РСФСР Верховнăй Советне суйламали Положенин" 80-мĕш статйи тăрăх тĕрĕс мар тесе йышăннă бӳллетенсем 73.226 пулнă. Кандидатсен хушамачĕсене хуратнă бӳллетенсем—320.496 пулнă.

РСФСР Верховнăй Советне суйланă 727 депутатран—коммуниссем 568 ҫын, партире тăманнисем 159 ҫын. Хĕрарăм депутатсем—157 ҫын.

РСФСР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕҫлекен Тĕп Суйлав Комиҫҫи.

Ийунĕн 28-мĕш, 1938 ҫул.

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйланă ДЕПУТАТСЕМ

ВЙАЧЕСЛАВ МИХАЙЛĂВИЧ МОЛĂТĂВ
Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата Шупашкар хула 2-мĕш суйлав округĕнчен суйланă

ЛАЗАРЬ МОИСЕЙĔВИЧ КАГАНОВИЧ
Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата Улатăр хулинчи чукунҫул суйлав округĕнчен суйланă

ИОСИФ ВИССАРИОНĂВИЧ СТАЛИН
Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата Канаш савăт суйлав округĕнчен суйланă.

МИХАИЛ ИВАНĂВИЧ КАЛИНИН
Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата Ҫавалкас суйлав округĕнчен суйланă

КЛИМЕНТ ЙЕФРЕМĂВИЧ ВОРОШИЛĂВ
Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата Мушар суйлав округĕнчен суйланă

АНДРЕЙ АНДРЕЙĔВИЧ АНДРЕЙĔВ
Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата Шăхасан суйлав округĕнчен суйланă

АНАСТАС ИВАНĂВИЧ МИКОЙАН
Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата Йетĕрне суйлав округĕнчен суйланă.

НИКОЛАЙ ИВАНĂВИЧ ЙЕЖОВ
Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата Чурачăк суйлав округĕнчен суйланă

АНДРЕЙ АЛЕКСАНДРĂВИЧ ЖДАНĂВ
Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата Шурча суйлав округĕнчен суйланă

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйланă депутатсен СПИСКИ

Шупашкар хули

Вйачеслав Михайлăвич МОЛĂТĂВ—Шупашкар хулинчи 2-мĕш номĕрлĕ суйлав округĕ.

Тимофей Аркадийĕвич АХАЗĂВ—Шупашкар хулинчи 1-мĕш номĕрлĕ суйлав округĕ.

Варфоломей Тихăнăвич ХАРИТОНĂВ—Шупашкар хулинчи 3-мĕш номĕрлĕ суйлав округĕ.

Шупашкар районĕ

Иван Ваҫилйĕвич ДУБĂВ—Кӳкеҫ округĕ.

Клавдийа Родионăвнă ЙЕВДОКИМĂВĂ—Ҫĕнйал округĕ.

Николай Ҫеменăвич ХАБАРĂВ—Тулик Хураски округĕ.

Тутаркас районĕ

Зойа Ананийĕвнă АНДРЕЙĔВĂ—Мăн Сĕнтĕр округĕ.

Кҫенийа Афанаҫйĕвнă БЫЧКОВĂ—Муркаш округĕ.

Михаил Ҫеменăвич КНЈАҪĔВ—Йункă округĕ.

Ваҫилий Данилăвич ДАНИЛĂВ—Турай округĕ.

Ишлей районĕ

Андрей Александрăвич ЖДАНĂВ—Шурча округĕ.

Аниҫийа Исайĕвнă ИЗЫКĂВĂ — Ишлей-Покровски округĕ.

Гурий Алекҫейĕвич ХЕРСОНĂВ—Ишек округĕ.

Сĕнтĕрвăрри районĕ

Михаил Андрейĕвич АНДРЕЙĔВ—Сĕнтĕрвăрри хула округĕ.

Йевгений Иванăвич ОДИНЦОВ—Нарат-чакки округĕ.

Артемий Иванăвич ИВАНОВ—Ĕсмĕл округĕ.

Ҫтепан Йакăвлĕвич ЙАКĂВЛĔВ—Шуршăл округĕ.

Йетĕрне районĕ

Анастас Иванăвич МИКОЙАН—Йетĕрне йал округĕ.

Федăр Макҫимăвич ВАГАНĂВ—Иетĕрне хула округĕ.

Петр Ҫтепанăвич ПОЛТĔВ—Хучаш округĕ.

Кҫенийа Данилăвнă ЙАКИМĂВĂ—Палтай округĕ.

Хĕрлĕ Чутай районĕ

Љубовь Ҫеменăвнă ПОЛЈАКОВĂ—Хĕрлĕ Чутай округĕ.

Алекҫей Михайлăвич РОЗАНĂВ—Пантăк округĕ.

Андрей Михайлăвич КРАСНОВ—Турхан округĕ.

Алекҫей Ҫергейĕвич ТОЛСТОВ—Штанаш округĕ.

Елĕк районĕ

Тимофей Порфирийĕвич КУЛИКОВ—Вутлан округĕ.

Пелагейа Ҫергейĕвнă МЕЦЕНАТĂВĂ—Елĕк округĕ.

Мирон Андрейĕвич АНДРЕЙĔВ—Йӳҫкасси округĕ.

Дмитрий Йакăвлĕвич МИТКОВ—Шĕмшеш округĕ.

Трак районĕ

Йевдокийа Дмитрийĕвнă ДМИТРИЙĔВĂ—Супар округĕ.

Петр Йефремăвич ЙЕФРЕМĂВ—Карай округĕ.

Никанор Миронăвич ҪЕМЕНĂВ—Ӳсĕк округĕ.

Ҫĕрпӳ районĕ

Николай Иванăвич ЙЕЖОВ—Чурачăк округĕ.

Михаил Федăрăвич ТЕРЕНТЙĔВ—Ҫĕрпӳ хула округĕ.

Александрă Йефимăвнă ЙЕФИМĂВĂ—Туҫи округĕ.

Тимофей Ваҫилйĕвич ВАҪИЛЙĔВ—Шĕнер округĕ.

Иван Йевдокимăвич ЙЕВДОКИМĂВ—Уйкас округĕ.

Куславкка районĕ

Александрă Александрăвнă ФИРСĂВĂ—Куславкка округĕ.

Герасим Иванăвич ИВАНОВ—Йелчĕк округĕ.

Александр Иванăвич ПОЖЕДАНĂВ—Тĕрлемес округĕ.

Кирилл Дмитрийĕвич МЕДЙАНИН—Карач округĕ.

Ҫĕмĕрле районĕ

Верă Каҫйанăвнă КАҪЙАНĂВĂ — Ҫĕмĕрле хула округĕ.

Аниҫийа Ҫеменăвнă ЧЕКМЕНЈОВĂ—Алкаш округĕ.

Петр Матвейĕвич МАТВЕЙĔВ—Камаш округĕ.

Ваҫилий Михайлăвич ШИШКИН—Хутар округĕ.

Вăрнар районĕ

Михаил Иванăвич КАЛИНИН—Ҫавалкас округĕ.

Николай Павлăвич ПАВЛĂВ—Вăрнар округĕ.

Йефроҫинийа Харитонăвнă ХАРИТОНĂВĂ—Уравăш округĕ.

Йефимийа Борисăвнă ВИНОГРАДĂВĂ—Нурăс округĕ.

Григорий Михайлăвич ГУҪĔВ—Хăпăс округĕ.

Шăхасан районĕ

Андрей Андрейĕвич АНДРЕЙĔВ—Шăхасан округĕ.

(Йулашки иккĕмĕш страницăра)

Чăваш АССР Верховнăй Советне суйланă депутатсен СПИСКИ

(Йулашки. Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра)

Андрей Иванăвич ИВАНОВ—Йăмаш округĕ.

Борис Илларионăвич ЙЕНИÇЕЙЁВ—Ăвăспÿрт округĕ.

Прасковийа Александрăвнă ГРИГОРЙЁВĂ—Шуркасси округĕ.

Канаш районĕ

Иосиф Виссарионăвич СТАЛИН—Канашри савăт округĕ.

Константин Тимофейёвич НАЗАРĂВ—Канаш хула округĕ.

Кирилл Куçмич ВАСТРУК—Карăклă округĕ.

Павел Ананйёвич БЕЛОРУССĂВ—Сиккасси округĕ.

Константин Иванăвич ИВАНОВ—Катек округĕ.

Вăрмар районĕ

Павел Йакăвлёвич САМАРИН — Вăрмар округĕ.

Марийа Федăрăвнă ФЕДĂРĂВĂ—Чупай округĕ.

Иван Александрăвич АЛЕКСАНДРĂВ—Йенкасси округĕ.

Иван Петрович ПЕТРОВ—Мăнçырма округĕ.

Тăвай районĕ

Климент Йефремăвич ВОРОШИЛĂВ—Мушар округĕ.

Александр Измайлăвич ИЗМАЙЛĂВ—Тăвай округĕ.

Софийа Родионăвнă РОДИОНĂВĂ—Вырăс Нăрваш округĕ.

Пăрачкав районĕ

Николай Николайёвич ДРЕНЙАСĂВ—Пăрачкав округĕ.

Александр Степанăвич РОДИОНĂВ—Çеменăвски округĕ.

Анастаçийа Максимăвнă ГРИШИНĂ—Сийавă округĕ.

Прасковийа Иванăвнă НОВИКĂВĂ—Рйабина округĕ.

Йĕпреç районĕ

Николай Çеменăвич БОДРОВ — Йĕпреç округĕ.

Иван Николайёвич БУРКОВ — Хурамал округĕ.

Çергей Кçенофонтăвич КОРОТКОВ — Клĕмкасси округĕ.

Наталийа Филиппăвнă ЗОТĂВĂ—Тимĕрчкасси округĕ.

Йелчĕк районĕ

Владимир Михайлăвич НЕМЦĔВ—Йелчĕк округĕ.

Иван Никифăрăвич НИКИФĂРĂВ—Тĕмер округĕ.

Федоçийа Йакăвлĕвнă СМИРНОВĂ—Тайапа округĕ.

Кувакинă районĕ

Александр Ваçилйёвич СОМĂВ—Кувакинă округĕ.

Федăр Дмитрийёвич ЗАШЧЕЛКИН — Кладбишчĕнск округĕ.

Аннă Кириллăвнă ЛЕБĔДĔВĂ—Турдакăвă округĕ.

Турхан районĕ

Ваçилий Çеменăвич КИРИЛЛĂВ—Турхан округĕ.

Дмитрий Андрейёвич АНДРЕЙЁВ—Аслă Арапуç округĕ.

Иван Захарăвич ЗАХАРĂВ — Пăлапуç Пашйел округĕ.

Патăрйел районĕ

Филипп Алекçейёвич МАТВЕЙЁВ—Патăрйел округĕ.

Вадим Петрович ЧЕРНОВ—Хирти-Сĕнтĕр округĕ.

Аннă Михайлăвнă МИХАЙЛĂВĂ — Туçа округĕ.

Шăнкăртам районĕ

Фадкла Сафиуллăвич САФИУЛЛИН — Шăнкăртам округĕ.

Зарифулла Галиуллăвич ГАЛИУЛЛИН — Урмайел округĕ.

Улатăр районĕ

Лазарь Моиçейёвич КАГАНОВИЧ—Улатăр чукунçул округĕ.

Лука Семенăвич СПАСĂВ—Улатăрти Ленинский хула округĕ.

Александр Павлĕвич ЙЕРОФЕЙЁВ—Улатăрти Кирăвский округĕ.

Йевдокийă Федăрăвнă ГРАБĂВĂ—Стемас округĕ.

Иван Çергейёвич МУРАШКИН—Чуварлей округĕ.

Филипп Степанăвич ÇТЕПАНĂВ—Алтышĕвă округĕ.

Шăмăршă районĕ

Аннă Иванăвнă ВОРОНЦОВĂ—Шăмăршă округĕ.

Варварă Игнатйёвнă ЖУРАВЉОВĂ—Пашйел округĕ.

ЧАССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕТНЕ СУЙЛАС ТĔЛĔШПЕ ĔÇЛЕКЕН ТĔП СУЙЛАВ КОМИÇÇИЙĔ.

Шупашкар хули Строителсен сатĕнче. Ийунĕн 26-мĕшĕнче суйлавçăсем ташлаççĕ.

Цыганов фото-ÿкерчĕкĕ.

Кĕçĕн Кипекре

Кĕçĕн Кипек йалĕ ийунь уйăхĕн 26-мĕш кунне музыкăпа кĕтсе илчĕ. Суйлав ирхине 6 сехетре пуçланмала, анчах халăх унччен чылай малтан пухăнчĕ.

— Çывăрас та килмест,—тет 76 çулхи колхозник Григорий Федăрăвич Федăрăв йулташ.

Туйри пек илемлетсе тунă шырлăкра патефон хаваслă йурăсем йурлаŤ. Шкул çурчĕ çинче радио кĕрлет. Пухăннă халăх музыкă итлет. Унтан инçех те мар тепĕр сĕтел лараŤ. Унта тăватшарăн ларнă та доминола, шашкăла, шахмăтла выљаççĕ. Биллиардла выљакансем патĕнче суйлав çулне çитмен çамрăксем пухăнса, кам мĕнле выљанине пăхса тăраççĕ. Сапур çумĕнче фото-витринă: çак савăнăçлă пурнăçа туса паракăнăн—аслă Сталинăн кун-çулне кăтартса паракан фотокартăчкăсем çакăнса тăраççĕ. Музыка патĕнче халăх туллийех. Йалти активист П. Коçтин йулташ патефон пластинкисене улăштарса лартса тăраŤ. Пĕр 80 çула çитнĕ карчăк патефон ларакан сĕтел патне утса пычĕ те патефона пур йенчен те çавăркаласа пăхма тытăнчĕ.

Патефонпа ĕçлесе ларакан П. Коçтин йулташ йурăсене пластинкăсем çине мĕнле ÿкерни çинчен каласа ăнлантарсан тин лăплăнчĕ карчăк. Вăл нумай вăхăт музыкăпа килленсе ларнă хыççăн:

— Пит савнăçлă пурнăçпа пурăнаŤ хаљхи халăх. Мана, ватă карчăка, лашапа пырса илчĕç. Тĕлĕнмеле пурнăç пулса карĕ,—тесе калаçма пуçларĕ.

Вырăссен сĕрен йурриве йурлаттарса пĕтерсен тепĕр ватă колхозник Йăкăнат Мĕтрийĕ марш выљаттарма ыйтрĕ.

Суйлав комиççин председателĕ Çтепанăв йулташ суйлав пуçланни çинчен пĕлтерсен, суйлавçăсем пĕрин хыççăн тепри кĕрсе сасăлама пуçларĕç.

Пĕрремĕш бÿллетене 76 çулхи колхозник-стахановец Г. Ф. Федăрăв илчĕ. Вăл суйласа тухнă хыççăн çапла каларĕ:

— Пуйан та савăнăçлă пурнăçшăн сасăларăм!

Сталинла тапхăр халăха савăнтараŤ, ватăсене çамрăклатаŤ. Мана 76 çулхи ватă старик çамрăк пек шÿт туса, кулкаласа çеç калаçни тĕлĕнтерчĕ. Вăл ватă пулсан та çамрăксемпе, хăйĕн внукĕпе—Ваçилий Антонăвпа ăмăртса ĕçлет. Иртнĕ çулта вăл пĕччен 463 ĕçкунĕ тунă. Г. Федăрăв колхоза кĕнĕренпе (1930 çултанпа) коњух пулса ĕçлесе 51 тыха пăхса ÿстернĕ. Ăна хушнă ĕçе пысăк тимлĕхпе туса пынăшăн темиçе хутчен те премиı панă.

Шкул çуртĕнче суйлав пыраŤ. Тулта суйлавçăсем савăнаççĕ. Халăх нумай. Йалпо, çапла пуласса сиссех пулас, пур таварсене те çителĕклĕ кÿрсе килнĕ. Кам мĕн илес тет, çавна илет.

Андрейёвпа Тимофейёв учителсем иккĕн тан хăйсен фото-аппарачĕсемпе халăх хушшинче тĕрмешсе çÿреççĕ. Вĕсем икĕ ватă старике—Краснов Филиппа Николайёв Куçма ура хуçса чăвашсен ĕлĕкхи ташшине ташланине ÿкерсе илме васкаççĕ. РСФСР-па ЧАССР Верховнăй Совечĕсене пĕрремĕш хут суйланă чухне Кĕçĕн Кипек халăхĕ мĕнле савăннине ÿкерсе, фото-выставкă уçаççĕ. Вăл выставкă пысăк памйатник пулса йулаŤ.

Суйлав комиççи ĕçе лайăх йĕркеленипе бÿллетенсем илнĕ çĕрте черет кĕтсе тăни пулмарĕ.

* * *

Кĕçĕн Кипек суйлав участкине кĕрекен суйлавçăсем пурте суйлава хутшăнса, 100 процентĕпех коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн кандидачĕсемшĕн сасăларĕç.

Усли Ваçлейĕ.

Таджик ССР Верховнăй Советне суйланин резуљтачĕсем

(Тĕп Суйлав Комиççи пĕлтернĕ тăрăх)

Таджик ССР Верховнăй Совет суйлавĕнче сасă правипе усă куракан суйлавçăсем пурĕ 764.483 çын, суйлавçăсен çав хисепĕнчен 99,5 процент сасăланă.

Таджик ССР Верховнăй Советне суйламали суйлав округĕсенче пуринче те сасăланисен пĕтĕм хисепĕнчен 99,64 процентĕ коммуниссемпе партире тăманнисен Сталинла блок кандидачĕсемшĕн сасăланă.

Таджик ССР Верховнăй Советне депутата суйланисен шутĕнче: Сталин, Молатăв, Каганович, Ворошилăв, Андрейёв, Йежов йулташсем.

(ТАСС).

Белоруççи ССР Верховнăй Советне суйланин резуљтачĕсем

(Тĕп Суйлав Комиççи пĕлтернĕ тăрăх)

Белоруççи ССР Верховнăй Совет суйлавĕнче сасă правипе усă куракан суйлавçăсем пурĕ 3.040.710 çын, çав хисепрен 3 030.148 çын сасăланă, вăл 99,65 процент пулаŤ.

Белоруççи ССР Верховнăй Советне суйламали суйлав округĕсенче пуринче те сасăланисен пĕтĕм хисепĕнчен 99,19 процент коммуниссемпе партире тăманнисен Сталинла блок кандидачĕсемшĕн сасăланă.

Минск хули тăрăх суйлавçăсем 100 процентĕпех сасăланă.

Белоруççи ССР Верховнăй Советне депутата суйланисен шутĕнче: Сталин, Молатăв, Ворошилăв, Каганович, Калинин, Микойан, Андрейёв, Йежов, Жданăв йулташсем.

(ТАСС).

Украинă ССР Верховнăй Советне суйланин резуљтачĕсем

(Тĕп Суйлав Комиççи пĕлтернĕ тăрăх)

Украинă ССР тăрăх Украинă ССР Верховнăй Совет суйлавĕнче сасă правипе усă куракан суйлавçăсем пурĕ 17.536.486 çын регистрациленĕ. Çак хисепрен сасăланă çĕре 17.467.909 çын хутшăннă, вăл суйлав правипе усă куракан граждансен пĕтĕм хисепĕнчен 99,62 процент пулаŤ.

Украинă ССР Верховнăй Советне суйламали суйлав округĕсенче пуринче те сасăланисен хисепĕнчен коммуниссемпе партире тăманнисен Сталинла блок кандидачĕсемшĕн 99,55 процент сасăланă.

Украинă ССР Верховнăй Советне депутата суйланисен шутĕнче: Сталин, Молатăв, Каганович, Ворошилăв, Йежов, Хрушчов, Бурмистенко, Коротченко, Успенский, Тимошенко, Богомолĕц йулташсем.

(ТАСС)

Паллăран та паллă кун

(Наратчакки йалĕ, Сĕнтĕрвăрри р.)

Уйар кун. Урамсене тап-таса шăлса тасатнă. Пÿртсемпе хапхасем çинче Верховнăй Совета суйламали кандидатсем çинчен пичетленĕ листовкăсем. Пайан ватти çамрăккипех праçникле тумланнă. Пурте тулли кăмăлпа кулаççĕ, савăнаççĕ. Колхоз правлени çурчĕ хĕрлĕ йалавсемпе, лозунгсемпе капăрланса суйлавçăсене кĕтсе илчĕ, кунта пайан сасăламали çурт.

Йунашарах сат-пахчи. Лапсака йывăççем айĕнче буфет уçнă. Сĕтел çинче çап-çутă сăмавар чашкăрса вĕресе лараŤ. Сасăлама килнĕ суйлавçăсем сулхăнта чей ĕçсе лараççĕ. Буфетпа йунашарах ташламали площадкă. Унта радио, хуткупăс, скрипкă, парапан тата патефон сасси йанăраса тăраŤ. Колхозниксем пĕрин хыççăн тепри тухса ташлаççĕ.

Шалта, колхоз правлени çуртĕнче, сасăламали пÿлĕмсем. Унта савăнăçлă питлĕ колхозниксемпе йединоличниксем пĕрин хыççăн тепри кĕрсе Зойа Ананйёвнăпа Одинцов йулташсемшĕн сасăласа тухаççĕ.

6 сехет çитсенех чи малтан йалти колхоз кĕтÿçĕ Клљамков Исаак хăйĕн бÿллетенĕсене урнăсене йачĕ.

Урамра кунĕпех шăнкăрав сасси. Пĕкĕсем çине мăшăр шăнкрав çакнă, хĕрлĕ йалавсемпе лентăсем вĕлкĕшсе пыраççĕ. Колхозăн чи чаплă лашисене илемлĕн кÿлнĕ, вĕсемпе ватă йе сывă мар суйлавçăсене суйлав участкине илсе пыраççĕ, килĕсене ăсатса йараççĕ.

Кунĕпе савăвăç, кунĕпех уйав, пĕтĕм халăх урамра. Каç сулхăнĕ ÿксенех пурте йалсовет пÿрчĕ патнеле утрĕç. Кунта—сценă. Занăвĕççем уçăлсанах йалсовет председателĕ Савинăв йулташ суйлав çинчен тата суйлава мĕнле хатĕрленсе кĕтсе илни çинчен кĕскен каласа пачĕ. Ун хыççăн пĕр пайлă комеди выљаса кăтартрĕç.

А. Петров.

Тăвайри митинг

ТĂВАЙ, ийунĕн 29-мĕш (телефон тăрах, хамăр корр.). Ийунĕн 28-мĕшĕнче Тăвайра РСФСР-па ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕнче коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блокĕ чаплă çĕнтерÿ тунă йатпа пысăк митинг пулчĕ. Митинга Тăвайри рабочисемпе служăшчисем тата çывăхри колхозсенчи колхозниксем 500 çын ытла пухăнчĕç.

Митингра ПСК(б)П райкомĕн секретарĕ Ваçилйёв тата ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйланă Родионăвăпа Измайлăв йулташсем тухса каларĕç. Кун хыççăн митингра пулнисем ЧАССР Верховнăй Советне Мушар суйлав округĕ тăрăх депутата суйланă Климент Йефремăвич Ворошилăв йулташ патне саламлă çыру йама йышăнчĕç.

Пикишкин.

Моторизациленĕ тата механизациленĕ çарсем кучухнехи вăрçăра

Моторизациленĕ çарсем тесе пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçнă чухне автомобилсемпе (груз тийесе çÿрекеннисемпе йе çăмăллисемпе) тата трактăрсемпе усă куракан çуран çар, утлă çар, инженерлă тата ытти йышши çарсен чаçĕсене калаççĕ. Çар чаçĕсем çав транспăртпа тăшман çывăхне пырса кĕрес умĕн йе çапăçусем пыракан вырăнсем патне çитес умĕн кăна усă кураççĕ.

Çарсене тата грузсене автомобилсемпе турттарса çÿресси 1914—1918 çулхи империалисăмлă вăрçă чухнех пит сарлакан пулса пынă. Вăрçă пынă 4 çул хушшинче французсен фронтĕнче пĕр англичансемпе французсем кăна вăрçă ĕçĕсем пынă вырăна 39 мĕлйун тоннă ытла груз тата 50 мĕлйун ытла салтак (тĕрлĕ йенсене) турттарнă.

Автомобил промышлĕннăçĕ пысăккăн ÿссе, аталанса пынă май, хаљхи вăхăтра пур çĕршывсенчи çарсенче те моторизациленĕ чаçсем тунă. Вĕсемсĕр пуçне, çарсенче автомобилсемпе çÿрекен йатарласа тунă çар чаçĕсем пур. Вĕсем тĕрлĕ грузсене, хĕçпăналсене тата куçса çÿреме автомобилсем çук çар чаçĕсене турттараççĕ.

Пулас вăрçăра моторизациленĕ чаççем, хăвăрт куçса çÿреме пултаракан çарсем, питех те пысăк вырăн йышăнмала, мĕншĕн тесен питех кирлĕ вырăнсене вăйсем хăвăрттăн илсе пырса тултарас тĕлĕшпе, тăшмана хыçран йĕрлес, ăна тылран пырса тапăнас тата ытти ĕççем тĕлĕшпе те çав моторизациленĕ чаççемпе пысăккăн усă курмала. Вăрçă пуçлансан моторизациленĕ чаççене, танксемпе пĕрле, йут территори çине чи малтан вĕсене кĕртсе йамала пулаŤ.

Механизациленĕ çарсем тесе машинсемпе çÿрекен чаççене çеç каламаççĕ, механизациленĕ чаççем тесе тата вăрçă ĕçне машинсем çинчех: танксем, бронеавтомобилсем, бронепойăссем çинче, паллах, вĕсем тупăсемпе тата пулеметсемпе хĕçпăшалланнă, туса пыракан чаççене калаççĕ.

Паллăх, кунта танк чаçĕсем уйрăм вырăн йышăнаççĕ. Бронеавтомобилпе танлаштарсан, танк вăл кирек мĕнле вырăнпа та çÿреме пултаракан гуçеницăлă машинă пулса тăраŤ, вăл начар çулсемпе малала хăвăрттăн пыма тата етем иртсе çÿреме май çук вырăнсемпе (сăмахран, шурлăхлă-лачакалă вырăнсем тăрăх) иртсе кайма пултараŤ.

Танксене витнĕ броњă вĕсен ăшĕнче ларса пыракан çынсене тата хĕçпăшалсене тăшман пуљĕинчен шанчăклăнах сыхлаŤ. Пулеметсенчен йе урăх хатĕрсенчен перекен пуљăсем ăна витеймеççĕ. Пысăк танксене ытла шултăра мар снарйадсем те витеймеççĕ.

* * *

Танксемпе чи малтан Англи пысăккăн усă курма пуçланă. Çав машинă 1916 çулхи çентăбĕрĕн 15-мĕшĕнче Сомм шывĕ патĕнчи (Францире) çапăçусенче чи пирвайхи хут куранна.

Çапăçусенче танксемпе вăрçма пуçланин историйĕ çакăн пек. Империалисăм вăрçи Хĕвеланăç фронтĕнче (Франци), вăл пуçлансан тепĕр 2 уйăхран, позициллĕ вăрçă пулса кайнă. Фронтра—Çурçĕр тинĕсĕн Белљги çыранĕсенчен пуçласа Швейцари патне çитеччен—вĕçĕ-хĕррисĕр окопсем сарлакан тăсăлса выртнă, вĕсене йăлтах пралуксемпе карса çирĕплетсе тухнă пулнă. Çав окопсенче пулеметсемпе çителĕклĕн хĕçпăшалланнă çынсем вырт-нă, вĕсем хăйсем çине тапăнса килекен тăшмана пулеметсенчен тата пăшалсенчен пеме лайăххăн хатĕрленсе тăнă. Çуран çар çавăн пек çирĕп позицисене хăватлă артиллери пулăшнипе те татса кĕме пултарайман, мĕншĕн тесен тăшман вырнаçнă çĕрте никам пырса тĕкĕнмен позицисем йаланах тăрса йулнă. Артиллери темиçе кун хушши персе хатĕрленнĕ хыççăн та оборонăри пулеметсен пĕр пайĕ тивĕнмесĕрех йулнă, атакă пуçлансан тăшманăн çăран пыракан цепĕсем аплипех çулăнса тăкăннă.

Чи пуçламĕшĕнчех наступлени туни ăнăçлăн пулнă пулсан та анчах кайран вăл часах вăйсăрланнă, мĕншĕн тесен 3 йе 6 талăк хушши артиллерирен персе хатĕрленнĕ хыççăн леш оборонăра тăраканни çĕнĕрен резервăсем илсе пырса тултарма тата артиллери çĕнĕрен персе хатĕрленнине çĕнсе тăкма оборонăн çĕнĕ линисене тума ĕлкĕрнĕ.

Анчах кун пек чухне артиллери персе хатĕрленни питех те хакла ларнă. Сăмахран, 1917 çулта çуллахине Ипр. патĕнче артиллери персе хатĕрленни наступлени тăвакансене 22 мĕлйун фунт стерлинга ларнă (4 мĕлйун снарйад ытла кăларса йанă пулнă), анчах вăл тăшман оборонине татса кĕме пултарайман. Сойузлă (Франципе Англин) çарсем наступлени туни унчухне кăштах малала кайнипе тата 400 пин çын вилнипе вĕçленнĕ.

Оборонă йенчен хирĕç тăнине путарса лартма урăх йапала тупмала пулнă. Çавна тупнă та вара. Вăл танксем пулнă—икĕ тупăпа тата тăватă пулеметпа хĕçпăшалланнă гуçеничнăй машинсем пулнă.

Танксем хутшăннипе пирвайхи ăнăçлă çапăçу вăл 1917 çулхи нойабĕрĕн 20-мĕшĕнче сойузниксем Кабре патĕнче тунă атакă пулнă. Англичансем артиллери персе хатĕрленмесĕрех, танксем пулăшнипе нимĕççен оборонине темиçе сехет хушшинче татса, 10 километр шалала кĕнĕ, 8 пин салтака тыткăна илнĕ тата 100 тупă туртса илнĕ, хăйсен мĕн пурĕ 1.500 çын пĕтнĕ.

Малала вара танксем хутшăннă çапăçусем пысăк ăнăçлăхпа пулса пынă, çавна май наступлени тăваканнисен те çухатусем сахал пула пуçланă.

Çулсем иртсе пынă. Танксем тата хăватлă та хăрушăрах хĕçпăшал пулса тăнă. Вĕсем пур çĕршыври хĕçпăшаллă вăйсенче те тĕп тĕрексем пулса тăнă. Çакăнпа пĕрлех тата танксене хирĕç тăмали хатĕрсем те сиксе тухнă. Йатарласа танксем çине пемели тупăсем тухнă тата вĕсен çулне тĕрлĕ загражденисем картласа ларта пуçланă.

Çакăн пирки вара танксемпе усă курасси çине урăхла пăха пуçланă. Малтанхи вăхăтра çарсем йăвăр танксемпе çеç хĕçпăшалланнă пулсан, хаљхи вăхăтра 5 тоннă тайакан çăмăлтан та çăмăл кайакан машинсемпе, çăмăллисем—12 тонна çити, вăтаммисем—25 тонна çити тата йăвăрисем—25 тоннă ытла тайакан машинсемпе хĕçпăшалланнă.

Кучухнехи танксем çапăçусенче пит хăватлă.

Америкăра туса кăларнă „Кристи“ йышши çăмăл танк, ăна 1928 çулта туса кăларнă, икĕ пулеметпа хĕçпăшалланнă, 7,8 тоннă туртаŤ. Ун çине витнĕ броњăн хулăнăшĕ—12,7 миллиметр. Гуçеницăлисем сехетре 68 километр кайаççĕ, урапалисем сехетре—112 километр кайаççĕ, гуçеницăли 120 километр инçене кайса вăрçма пултараŤ, урапалисем—185 километр инçене кайса вăрçма пултараççĕ.

Англире 1925 çулта туса кăларнă вăтам йышши танк—„Виккерс“ 13,4 тоннă тайаŤ. Танк ултă пулеметпа тата 47 миллиметрлă пĕр тупăпа хĕçпăшалланнă. Ун çине витнĕ броњăн хулăнăшĕ—8 — 15 миллиметр. Чи хăвăрт кайсан сехетре 26 километр кайаŤ, инçене 220 километр кайса вăрçма пултараŤ.

Францире 1926 çулта туса кăларнă йăвăр танк—„ЗС“ 74 тоннă тайаŤ, вăл ултă пулеметпа, 155 миллиметрлă тата 75 миллиметрлă тепĕр тупăпа хĕçпăшалланнă. Ун çине витне броњăн хулăнăшĕ—30—50 миллиметр, чи хăвăрт кайсан сехетре 13 километр кайаŤ, 150 километр инçене кайса вăрçма пултараŤ.

Танк чаçĕсем хаљхи вăхăтра пур çарсенче те пур. Анчах танксем çапăçусенче хăйсем тĕллĕн çеç татăклă çĕнтерÿ тума пултарайманни паллă ĕнтĕ. Вĕсен вăйĕпе хăвачĕ çарсен ытти чаçĕсемпе пĕрле, пуринчен малтан артиллерипе пĕрле вăрçнинче пулса тăраŤ,—артиллери вăл тăшманăн артиллерине тата унăн танксене хирĕç пемели ытти йышши хатĕрĕсене путлантарса лартаŤ.

Çапăçура çуран çарсемпе (йе утлă çарпа) пĕрле вăрçса, танк чаçĕсем, вĕсем хутшăнмасăр çынсене йышлăн вĕлернипе, вăхăта тата хĕçпăшал хатĕрĕсене ытлашши нумай пĕтернипе çеç пурнăçа кĕртмеле задачăсене татса параççĕ.

Сăмахран, пилĕк танкăлă взвод пĕр минут хушшинче пралуксемпе карса тухнă çĕрте çуран çара тухма 5 уçă вырăн туса пама пултараŤ. Артиллери 1—2 батарейă составпа çав ĕçе 1—1,5 сехет хушшинче кăна тума пултараŤ. Апла пулсан, танксем наступлени туса пыраканнин çыннисене нумайĕшне çăлса хăвараççĕ çеç те мар, вĕсем тата вăхăта та перекетлеççĕ, çапăçăва та хăвăрттăн туса иртерме май параççĕ.

Чи пысăккăн хĕçпăшаланнă государствăсенче, танклă чаççемсĕр пуçне, мотомеханизациленĕ сойединенисем тунă, вĕсен составне танк чаçĕсем, моторизациленĕ çуран çар, артиллери, химилĕ, инженерлă чаççем тата авиаци кĕреççĕ. Çав сойединенисене хăйсем

...авиацийĕн çĕнĕ чаплă çĕнтерĕвĕ

...ивосток районĕ маршрутпа ...ине организацилес тĕлĕшпе ...вă Комиççийĕ пĕлтерни

...ос- ...та ...ухас ...сехет ...аерод- ...вахĕнче) ...структăрăн ...ољочĕпе вĕç- ...—ђотчик В. К. ...та штурмăн А. М. ...и—хăйсен умне ларт- ...не калама çук чаплăн ...кĕртнĕ, ийунĕн 28-мĕшĕн- ...ет те 12 минутра Влади- ...ан 155 километрти Спас- ...перех анса ларнă.

...авпа Хабаравск хушшинчи ...тан иртсе кайса анса лар- ...сск патне çитиччен сыв- ...лĕн тăршшĕ тӳрĕ линипе ...сан 6.850 километр. Чăнни- ...нине илсессĕн 24 сехет те ...ут хушшинче самољот 7.600 ...илометр ытла вĕçсе иртнĕ. Са- мољот вĕçнĕ вăтам хăвăртлăх— сехетре 307 километр пулнă.

Вĕçев Мускав—Кирăв—Чердыњ —Ванаварă—Бодайбо—Зейа—Хабаравск тата унтан лереле Владивосток районне çитиччен тăсăлакан тӳрĕ линипе пулса иртнĕ.

Вĕçев çулĕ халиччен сăнаса вĕренмен вырăнсем, тундрă тата тайга урлă тăсăлса выртнă. Вĕçев метеорологи тĕлĕшĕнчен калама çук йăвăр условисенче пулса иртнĕ. Пĕтĕм вĕçев çулĕн тăршшăнчен 1000 километрĕнче кăна екипаж çĕре курса пынă, ытти çулĕ пĕлĕтсен çийĕпе тата пĕлĕтсем витĕр пулнă. Вĕçев çӳлĕшĕ 30 метртан 7.000 метра çити улшăна-улшăна пынă. Хабаравск патне çывхарса çитнĕ тĕлте „Мускав" хăватлă аçа-çиçĕмлĕ, çăмарлă пĕлĕтсене тĕл пулнă, пĕлĕтсем çĕр çумне çитиех хупăрласа тăнă. Сăртлă-тусемлĕ вырăнта пĕлĕтсен ăшĕнчен тухма май пулман. Аçа-çиçĕмлĕ çăмăр пĕлĕчĕсенчен пăрăнса кайса, екипаж тинĕс хĕррине тухнă, унта вара пĕлĕтсем витĕр уçă вырăна тухнă та палăртса хунă маршрутпа малала вĕçнĕ.

Анса ларнă хыççăн самољотăн материаллă пайĕсем пĕтĕмпех йурсавлă. Самољот бакĕсенче татах 500 килограм бензин йулнă. Хăйулă та паттăр ђотчиксен сывлăхĕ лайăх.

„Мускав" самољотăн геройла екипажĕ совет авиаципе тĕнчери авиаци историне калама çук чаплă страницă çырса хучĕ.

Правительствă Комиççийĕ.

★ ★

Спасскран, 1938 ç. ийунĕн 28-мĕшĕнче

МУСКАВ, КРЕМЉ

Сталин, Молăтăв, Каганович, Ворошилăв, Йежов йулташсене

Мускав—Владивосток вĕçеве пĕр талăкра пурнăçа кĕртнĕ.

Ђотчик КОККИНАКИ.
Штурмăн БРЙАНДИНСКИЙ.

★

Спасскран, ийунĕн 28-мĕшĕнче

МУСКАВ, КРЕМЉ

Сталин, Молăтăв йулташсене

Есĕр шаннине тӳрре кăлартăм, заданине пурнăçа кĕртрĕм.

КОККИНАКИ.

★

ВЛАДИВОСТОК

В. Коккинаки, А. Брйандинский йулташсене

Правительствă заданине калама çук чаплăн пурнăçа кĕртнĕ йатпа Сире хĕрӳлĕн сывлăх сунса саламлатпăр.

Мускав—Хабаравск—Владивосток районĕ маршрутпа паттăрăн вĕçсе тухни, 7 600 километр ытла тăсăлакан пит йăвăр çула 24 сехет те 36 минут хушшинче вĕçсе тухни—совет авиаципе тĕнчери авиаци историне çĕнĕ калама çук чаплă страницă çырса хурат.

Совет Сойузĕнчи ĕççыннисем Сирĕн çĕнтерӳпе мухтанаççĕ.

Сире ыталатпăр тата Сирĕн аллăрсене чăмăртатпăр.

И. Сталин	А. Андрейĕв
В. Молăтăв	А. Жданăв
К. Ворошилăв	Н. Йежов
М. Калинин	Н. Хрушчов
Л. Каганович	М. Каганович
А. Микойан	А. Локтионăв.

Совет авиацийĕн çĕнĕ çĕнтерĕвĕ

Мускав—Владивосток хушшине пĕр талăкра

Мускав патĕнчи Щелковски аеродром тĕлĕнмеле стартсен вырăнĕ пулса авиаци историне кĕрет. Аеродромăн бетонлă çулĕ çинчен пуçласа Совет Сойузĕн пĕтĕм кĕтессисем йеннеле çеç мар, хамăр тăван çĕршывăн хĕрлĕ чиккисен леш йеннеле, таçта инçенеле те, халиччен пулман маршрутсем тăсăлса выртрĕç.

Çӳле вĕçекен, никампа танлаштарма май çук чаплă маçтăр, йăланах хăйпе пĕрле пулакан А. М. Брйандинскипе пĕрле инçене хăвăрт вĕçмели чи йăвăр категорипе вĕçсе пĕтĕм тĕнчери виçĕ рекорда хысала тăратса хăварнă Владимир Константинăвич Коккинаки аеродром çинчен нумай хут вĕçе-вĕçе çĕкленнĕ.

Ийунĕн 27-мĕшĕнче хăйулă та паттăр сталинла сокăлсем—Коккинакипе Брйандинский йулташсем, хамăр çĕршывăн сăртлă-тулă вырăнĕсем, тӳрем вырăнĕсем, тундрисем тата йуханшывĕсем урлă Инçет-Хĕвелтухăçне пĕр лармасăр хăвăрт вĕçме тытăнмашкăн, Щелковски аеродромăн старт çулĕ çинче çĕнĕрен тĕл пулчĕç.

Мускав—Владивосток маршрутпа ниçта анса лармасăр вĕçсе тухма кайакан самољот аеродром çинчен вĕçсе çĕкленес умĕн штурмăн Брйандинский йулташ çапла каланă:

— Пирĕн вĕçевĕн хакĕпе уйрăмлăхĕ çакăнта: епĕр чи пуçласа хăвăртран та хăвăрт експреслă рейспа, чи кĕске çулпала çĕршыв урлă хĕвеланăçĕнчен хĕвелтухăçне çитиччен вĕçсе тухатпăр. Граждăнла сывлăш флочĕн ђотчикĕсем тата Çурçĕр тинĕс çулĕн Тĕп управленин пољарти авиаци ђотчикĕсем вĕçсе çӳрекен трассăпа танлаштарсан, пирĕн трассă (çул) 1.200 километр ытла кĕскерех.

Ийунĕн 27-мĕшĕнче ирхине 8 сехет те 36 минутра ђотчик Коккинаки Иљйушин йулташ конструкциленĕ икĕ моторлă самољот çинче Инçет-Хĕвелтухăçнеле вĕçсе çĕкленнĕ.

Ийунĕн 28-мĕшĕнче ирхине совет çĕршывĕнчи ĕççыннисем çакна пĕлчĕç: Мускав—Владивосток хушшинчи пĕр лармасăр вĕçсе тухмали калама çук чаплă, 7 пин километр тăрăшĕне тăсăлакан вĕçев вĕçне тухнă.

Совет авиацийĕ çĕнерен калама çук чаплă çĕнтерӳ турĕ.

Паларса тăракан, хăйне пĕрре çеç мар мухтавпа витнĕ чаплă ђотчик Владимир Коккинаки Совет авиацин историне калама çук чаплă çĕнĕ страницă çырса хучĕ.

Хăйĕн социалисăмлă тăван çĕршывĕн сулăмлă партриочĕ, хăй тăван çĕршывăн чапне татăх ӳстерес тесе, тата тепĕр паттăр та чаплă ĕç турĕ.

* * *

Владимир Коккинаки 1904 çулта, Новороссийск хулинче чукун-çул çинче ĕçлекен весовщик çемйинче çуралнă. 12 çула çитсен вăл ĕçлесе пурăнма тытăнат.

Владимир Коккинаки хăй пурнăçĕнчи çак темиçе паллă датăна хавасланах аса илет:

1926 çулхи кĕркунне—Хĕрлĕ Çара илеççĕ.

1928 çул—Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (большевиксен) Партине кĕрет.

1936 çул правительствăн пысăк та чаплă наградине—Ленин орденĕ илет.

1937 çулхи декабĕрĕн 12-мĕшĕ—Керч суйлав округĕнчи суйлавçăсем Коккинаки йулташа СССР Верховнăй Советне депутата суйлаççĕ.

Халăхшăн, большевикла партишĕн, Ленин—Сталин ĕçĕшĕн йăланах тӳрĕ кăмăлпа тăрăшакан Владимир Константинăвич Коккинаки çапла калат:

„Епĕ хамăн тăван çĕршывăмпа мухтанатăп, унăн чечекленессишĕн мĕн тума май пуррине йăлтах тăва тăп. Тăшман пирĕн чикĕсем çине алă çĕклесен, епĕ социалисăм çĕршывĕн воинĕсен малти пĕррemĕш речĕсенче пулăп, кирлĕ пулсан, уншăн хамăн пурнăçăма та парăп".

(ТАСС).

Совет Сойузĕнчи курортсем тăрăх

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Сочи хулинчи Сталинский проспект,

Фото—Ю. Хеллирăн (Сойузфото).

Вăрмансене пушартан сыхлас ĕçе вăйлатмала

Вăрмансем—государствă пурлăхĕ. Çак хаклă пурлăха тирпейлĕ пăхса усрасси—вăрман хуçалăх работникĕсен кулленхи чысла ĕçĕ пулса тăрат. Вăрман работникĕсем умĕнче уйрăмăнах çулахи вăхăтра ответлă задачăсем тăраççĕ. Çулахи вăхăтра вăрмансене тасатас, çĕнĕрен вăрлăхсем акас йенĕпе пысăк ĕçсене тумала. Çавăнпа пĕрлех вăрмансене пушартан сыхлас ĕçе аван йĕркелемеле. Çаксене ăнăçлăн пурнăçа кĕртме пысăк ответлăхпа, организацилĕхпе çине тăрса ĕçлени кирлĕ.

Мĕнле ĕçлеççĕ-ха вăрман работникĕсем? Фактсем пачах та çителĕксĕр ĕçлени çине кăтартса параççĕ. Акă, пушартан сыхланас ĕçе мĕнле йĕркелениине илер. Вăрман хуçалăх управленийĕ вăрмансене пушартан сыхлас тĕлĕшпе тумали ĕçсене кăтартса уйрăм приказ кăларнă. Анчах ку тăрана çитиччен те вăл приказ нумай çĕрте хут çинче çеç йулат-ха. Вăрман хуçалăх директăрĕсенчен чылайăшĕсем ку ĕçрен пăрăнса тăма пикенеççĕ.

Кирери вăрман хуçалăх директăрĕ Тарасăв йулташ пĕррехине Љуљă шыве йенчи вăрманта пушар тухни çинчен пĕлтерӳ илнĕ. Вăл пушар тухнă вырăна хăвăртрах кайас вырăнне, ăçта çуннине пĕлме обйезчике йарат те лăпланса ларат. Пушар ăçта тухнине пĕлме кайаканни 15 километр хушшине 8 сехет кайса та çитмен. Вара вăл пушар ăçта тухнине пĕлме тепĕр сынна йарат. Çавна пула пушар сӳнтерессине иккĕмĕш кун тин организациленĕ. Пушара сӳнтерĕ хыççăн та унăн сăлтавне çийĕнчех тĕпĕслесе тухман. Ку факт вăрман работникĕсем хушшинчи ответсăрлăх çинчен, дисциплинă çукки çинчен питех те лайăх каласа парат. Вăл факт вăрман хуçалăх управленин руководителĕсем кивĕ меслетсемпе йĕртсе пыни çине те кăтартса парат.

Ытти вăрман хуçалăхĕсенче те пушартан сыхланас ĕçе кирлĕ пек йĕркеленĕ теме çук-ха. Улатăр вăрман хуçалăхĕнче пушарсем мĕнрен тухнине тĕпĕслес ĕçе вăрăма чăсаççĕ. Пăрачкав вăрман хуçалăхĕн руководителĕсем пушарсем пулнине пытарса тăрас киревсĕр çул çине тăнă. Пĕтĕм хуçалăхĕсем тăрăх илсен пушартан сыхланас йенĕпе тумали ĕçсене 44 процентне çеç пурнăçа кĕртнĕ. Шăмăршă вăрман хуçалăхĕн директăрĕ пушартан сыхланас йенĕпе хăйĕн участкинче мĕн тумалине те пĕлмест. Паллах ĕнтĕ, унта мĕнте пулин курăнмалăх ĕç туни çинчен каласмали те çук.

Государствăн ответлă ĕçĕ çине çийелтен пăхма, пысăк ĕçрен пăрăнса тăма никамăн та нимĕнле права та çук. Вăрман хуçалăхне вăйлатма, ăна тирпейлĕ пăхса усрама лайăх условисем туса панă. Вăрман хуçалăх управленин работникĕсем хушшинче ответлăха вăйлатса, дисциплинăна çирĕплетсе ĕçри сӳрĕклĕхе вăхăтра пĕтермеле. Вăрмансене сыхласа усрассине çирĕппĕн организацилес пулат.

П. З.

„Хĕрлĕ Павари" колхозра

Çĕрпӳ районĕнчи „Хĕрлĕ Павари" колхоз пĕлтĕр вăйлă тырпул туса илнипе Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкинче пулма тивĕçлĕх илчĕ. Хаљ колхозниксем çак чаплă чыслăха—Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкине йалхуçалăхĕнчи пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ. Кăçал колхоз вăтам шутпа гектартан 120 пăтран кайа мар тĕштырă туса илес задачă лартнă. Колхозниксемпе колхозницăсем илнĕ обйазательствăна пурнăçласси шĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

Вăйлă тырпул туса илес пулсан, тырпулсене çумкурăксенчен таса тытса тăни кирлĕ. Çакна тĕрĕс ăнланнă „Хĕрлĕ Павари" колхоз членĕсем. Çумкурăксемпе кĕрешме бригадăсенче звеносем организациленĕ. Çав звеносем хăйсене çирĕплетсе панă участкăсене йăланах таса тытса тăрассишĕн тăрăшаççĕ. Кĕрхи тырăсене тата çуртри калчисене çумкурăксенчен иккĕмĕш хут тасатнă. Кĕрхи тулă, йаровизацилесе акнă тырăсем пит лайăх çитĕнеççĕ.

Колхозри бригадăсем çитес çулхи вăйлă тырпулшăн халех кĕрешме тытăннă. Уйа 2 пин лав тислĕк кăларса ирхи çĕртме сухи тунă. Çĕртме тунă лаптăка таса тытса тăраççĕ.

Колхоз тырпулсене пуçтарса кĕме те хатĕрленет. Жнейкăсене, молотилкăсене тата машинăсене йусаса лартнă. Çĕнĕ тырăсене хумали ампарсене тасатнă, анчах вĕсене хаљ те дезинфекци туман. Çакă колхозăн пĕр çитменлĕхĕ пулса тăрат.

П. Љвов.

Ишлей районĕнче васкамаççĕ

Ишлей районĕнче çумкурăксемпе кĕрешес, тырпулсене уйран пĕр тăкаксăр пуçтарса кĕме хатĕрленес ĕçсем начар пыраççĕ. Уйрăмах çум çумлас ĕç ытла та йулса пырат. Ийунĕн 25-мĕшне çурхи тырăсене—13 процент, кĕрхи тырăсене—40 процент, клевĕре—32 процент кăна çумкурăксенчен тасатнă.

Тырăсене хумали ампарсене тасатас, йалхуçалăх машинĕсене йусас тĕлĕшпе те Ишлей районĕ мухтанма пултараймаст. Районра нихăш колхозра та ампарсене кирлĕ пек тасатса дезинфекцилемен. Районра 165 жнейкăран 112 жнейкă, утă çулмали 34 машинăран 8 машинă çеç йусанă. Молотилкăсене йусама тытăнмапа пĕрех.

Колхозсенче кĕлте туртармали урапасем, михĕсем çителĕксĕр. Акă, „Чантăр" колхозра 20 лаша пуçне 4 урапа, „Хĕрлĕ флот" колхозра 50 лаша пуçне 8 урапа çеç тивет. Çак асăннă колхозсем тырпулсене пуçтарса кĕме ытла та вăрахăн хатĕрленсе пыраççĕ.

Тырпулсем тулса пыраççĕ. Ыраш вырма тухас вăхăт нумай йулмарĕ. Çак йулнă вăхăтпа кашни колхозăн туллин усă курмала. Тырпулсене уйран пуçтарса кĕме тĕплĕн хатĕрленсе пымала.

Г. Шчербаков.
И. Макçимăв.

Колхозсен уйхирĕсенче

Калчасене сăнаса тăраççĕ

ТĂВАЙ. Колхозсен уйхирĕсенче тырпулсем лайăх çитĕнеççĕ. Колхозсенче вăйлăн çитĕнекен тырпулсене сăнаса тăраççĕ, вĕсем çинче тухнă çумкурăксене çумлаççĕ. Кунпа пĕрлех вĕсем тырпулсене пуçтарса кĕртме хатĕрленеççĕ.

МТС—колхозсемшĕн пысăк пулăшу пулса тăрат. Хаљ МТС колхозсенчи тырпулсене вăхăтра пуçтарса кĕме хатĕрленет. Кăçал уйхирсенче 9 комбайн ĕçлемеле. Вĕсенчен саккăрĕшне йусанă. Колхозсенче комбайнсем ваљђи участкăсем уйăрса хунă.

Сложнăй молотилкăсем—11, вĕсенчен 5 çеç йусанă-ха. МТС н ку тĕлĕшпе васкани кирлĕ.

Машинă-трактăрлă станцинче машинăсене йусас тĕлĕшпе Н. Иванов пысăк тĕслĕх кăтартат. Пур машиноведсен те Иванов опычĕпе усă курма тăрăшмала.

Иванов машиновед иртнĕ çулта нормă тăрăх 400 тоннă çапас вырăнне 1257 тонна çапнă. Вăл кăçал та çакăн чухлех çапма хăй çине обйазательствă илнĕ. В. Илйин.

Çумкурăксене çумлаççĕ

Хучашри „Хĕрлĕ Хучаш" колхозра (Йетĕрне р.) кашни бригадăрах çумкурăксене çумлама тытăнчĕç. Кĕрхи тулă тата клевĕр калчисене малтанах çумласа пĕтернĕ. Хаљ ийунĕн 25-мĕшне, 60 гектар çуртри калчисене çумкурăксенчен тасатрĕç.

Г. Ваçилйĕв.

Икĕ хут çумласа тухрĕç

Йĕкĕрварти „Шурăмпуç" колхозра (Çĕрпӳ р.) кĕрхи тулăпа клевĕр калчисем çинчи çумкурăксене икĕ хутчен çумласа тасатрĕç. Хаљ çуртри калчисем çинчи çумкурăксене çумлаççĕ. Çум çумлас ĕçре 1-мĕш бригадă малта пырат. Ку бригадăра ĕçлекен колхозницă Кира Никитина çум çумлас ĕçре пит тăрăшса ĕçлет.

А. Чернов.

Колхозниксем пурте çум çумлană çĕрте

„Ирĕклĕх" колхозра (Шăхасан р.) çумкурăксене çумлама мĕн пурĕ 9 звено организациленĕ. Кашни звенора 15 шер çын ĕçлет. Звеносем пурте пĕр-пĕринпе социалисăмла ăмăртса ĕçлеççĕ. Пĕр йăн кунччен çуртри уйĕнче 60 гектар çумласа тасатнă.

И. Çмирнов.

Витнĕ итем тата вите турĕç

Анаткассинчи (Трак р.) Молăтăв йачĕпе тăракан колхоз кăçал çĕнĕ строительствăсем нумай тăват. Çак кунсенче колхозра пĕр витнĕ итем тата 120 сысна вырнаçмалăх çĕнĕрен таса та çутă вите туса лартрĕç.

В. Ваçилйĕв.

тĕллĕн, ытти çарсенчен уйрăм вăрçмала тунă, çавăнпа та вĕсем тăшманăн чĕрĕ вăйне çĕмĕрсе тăкма çеç мар тата, кирлĕ пулсан, тытса илнĕ территорине тытса тăма та пултармала. Моторизациленĕ чаçсем тунă çитĕнӳсене çирĕплетме тата тĕл пулакан йăвăрлăхсене (çырмасем, пралуксемпе карса тухни, тăшман артиллерирен персе тăни тата ытти те) çĕнтерме танксене пулăшаççĕ.

Çав мотомеханизациленĕ сойединенисемпе мĕнле усă курмала пулат-ха? Фашисла Германири пĕр çар çынни-писатель Йустрăв çапла çырат: „Малта пыракан çар, чи хăвăрт вăрçакан çар, çирĕпрен те çирĕп бриллиантсемпе (танксемпе) тата питех те çивĕч куçсемпе (авиаципе) хĕçпăшалланнăскер, тăшман кĕлеткине савăл пек çурса кĕрсе каймала. Çав уçăмсем витĕр вара ешелонсем кĕрсе кайаççĕ, вĕсем кĕтмен хушăран удар туса, хăйсен тĕп тĕллевне—тăшман фронтне çĕмĕрсе тăкассине пурнăçа кĕртеççĕ".

Германин тепĕр çар писателĕ—генерал Еймансбергер фронта татса кĕрес пулсан çав ĕçе çуран çарсен 10 дивизине тата моторизациленĕ 5 дивизине, 3.900 танк, 1.200 тупă тата 2.040 самољот хутшăнтарма кушат, унтан вара, татах шалала вăрçса кĕме 5 000 танк йамала, тесе калат.

Мотомеханизациленĕ çарсемпе усă курма нимĕçсем çавăн пек шутлаççĕ те ĕнтĕ. Фашиссем хăйсем тĕллĕн тăракан механизациленĕ сойединенисене (танкăлă дивизисене), маневăрсенче тĕрĕсленĕскерсене, „пысăк вăрçă" ваљђи хатĕрлеççĕ. 1937 çулта Германи çарĕсенче çавăн пек дивизисем пурĕ 5 пулнă. Вĕсенчен пĕр пайĕ, паллах, хаљхи вăхăтра Австрире тăрат.

Фашисла Итали те мотомеханизациленĕ çарсене пысăк вырăна хурат. Испани çарĕсемпе вăрçнă çĕрте итаљйанецсем нимĕç оккупанчĕсем мĕнле усă курнă, танксемпе вĕсем те çаплах усă кураççĕ. Анчах, Итали интервенчĕсем Испанине йанă танксем пĕрремĕш вырăнтисем пулса тăмаççĕ; республиканецсен танкĕсемпе тĕл пулсан, вĕсене республиканецсен танкĕсем çĕмĕрсе тăкаççĕ.

Фашисла Йапони Китайпа вăрçнă çĕрте хăйĕн çуран çарне хӳтлеме танксен ытла пысăках мар ушкăнĕсемпе усă курат. Анчах çакă паллă, йапонецсен хăйсем тĕллĕн вăрçма пултаракан механизациленĕ бригадăсем виççĕ тата танкăлă батаљйонсем сахалтан та вуннă пур. Йапони военщинин вĕсене „пысăк вăрçа" ваљђи усрат пулмала.

* * *

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн полевой уставĕ танксем умне питех те çирĕп требăванисем лартат. Танксене, пысăк та хăватлă вăй пулса тăраканскерсене, пирĕн çуран çарпа утлă çара малала кайма çул уçса парас ĕçе йамала.

„Пулас вăрçăра ытти çарсемпе пĕрле танксемпе массăлăн усă курнипе пирĕн тăшман фронтне татса кĕмеле, хупăрласа илсе ăна пĕтерсе тăкмала.

Танксене хирĕç пемели кучуххехи артиллери питех те хăватлă вăй пулса тăнине шута илсе, пирĕн танксем тăшман çине хамăрăн артиллери çирĕппĕн пулăшнипе атакăламала.

Тĕрлĕрен тактикăлă ушкăнсем туса, танксем хăйсен çуран çарне малала кайма пулăшаççĕ. Стрелковăй ротăсене, батаљйонсемпе полксене малала илсе пыма танкăлă çуран çар ушкăнĕсем тăваççĕ. Çав ушкăнсем çуран çарсемпе çума-çумăн тăрса вăрçаççĕ, вĕсем çуран çарсенчен 600 метртан айакра тăмала мар.

Тăшман вырнаçнă çĕрте шалта вăрçмашкăн тата унăн артиллерине, резервисемпе штабĕсене çĕмĕрсе тăкма инçене кайса вăрçма пултаракан хăватлă танксенчен ушкăнсем туса уйăраççĕ. Çав ушкăнсене артиллери пулăшат. Инçене кайса вăрçакан танкăлă ушкăнсем авиаципе пĕрле командовани заданине пурнăçа кĕртеççĕ.

Хĕрлĕ Çарăн полевой уставĕнче çапла каласа çырнă: „Танксенчен, артиллерирен тата транспăртпа çӳрекен çуран çарсенчен тăракан механизациленĕ сойединенисем умра тăракан задачăсене хăйсем тĕллĕнех, ытти çарсенчен уйрăм тăрса вăрçнипех, йе тата вĕсемпе пĕрле вăрçнипе татса пама пултараççĕ. Механизациленĕ сойединенисем хăвăрттăн куçаççĕ, хăватлă вăй пулса тăраççĕ. Механизациленĕ сойединенин çапăçура тĕп ĕçĕ пулса тăраканни танксемпе атака тăвасси пулат, çав атакăна артиллери организацилĕн персе тăнипе тумала. Механизациленĕ сойединенине çапăçура авиацин пулăшмала".

Моторизациленĕ çарсемпе механизациленĕ çарсем çавăн пек пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ ĕнтĕ пулас вăрçăра.

Пирĕн вăйлă та хăватлă Хĕрлĕ Çар çарсене лайăх техникăпа хĕçпăшаллантарас, моторизациленĕ çарсемпе механизациленĕ чаçсене вăйлатса пырас тĕлĕшпе сахал мар çитĕнӳсем тунă. Пирĕн Хĕрлĕ Çарăн хĕçпăшалĕсен хисепĕнче совет çыннисем конструкциленĕ, совет материалĕсенчен тунă калама çук чаплă танксем пур.

Пирĕн çĕр çине тапăнма шухăшлакан агрессăр хăйĕн çурăмĕ çинче совет танкĕсен вăйне лайăххăнах туйса илет. Хĕрлĕ Çарăн мотомеханизациленĕ чаçĕсен пуринчен те пысăк çитĕнĕвĕ—вăл калама çук чаплă танкиссем, сталинла саманари çынсем, тăван çĕршыва, коммуниссен партине, халăхсен çулпуçне Сталин йулташа чĕререн йуратакан çынсем пулса тăраççĕ. „Пирĕн,—тесе каланă Ворошилăв йулташ,—сахал мар чаплă та мухтавлă танкиссем пур, вĕсем, маç ăрсем пекех, хăйсен хăватлă машинĕсене выљђана пекех тыткалаççĕ".

Пирĕн çĕршыв мухтавлă танкиссен йачĕсене—Совет Сойуз Геройĕсен, çарти вĕренӳре халиччен курман пысăк маçтăрлăхпа çитĕнӳсен образецĕсене кăтартнă геройсен йачĕсене нумай пĕлет. Совет танкисĕсем фашисла агрессăрсемпе, вĕсем тăван çĕршывăн никам тĕкĕнме пултарайман чиккисене тапăнма хăйсан, пуçланнă чи пирвайхи çапăçурах хăйсен таланчĕсене кăтартма хатĕр.

Полковник В. ТЕРЕЩЧЕНКО.



Республикăлă Испанире

Италипе Германи интервенчĕсем Барселона çине тискеррĕн бомбăсем пăрахаççĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: „Колизей" кино-театр çуртĕ,—бомбăсем тивнипе çĕмĕрĕлнĕ.

Союзфото („Пресклише").

Йапони хуçалăхĕ вăрçă йăварлăхĕсем айĕнче

Йапони империализмĕ Китайа хирĕç вăрăма тăсăлакан тата çĕршыва халран йаракан вăрçа пуçланăранпа кĕç пĕр çул талăк тулать. Çак çул талăк хушшинче Йапонин пĕтĕм халăх хуçалăхне çар çыннисем контрольне çирĕплетрĕç. Çак çулхи март уйăхĕнче парламентăн йулашки çессийĕ наци пĕтĕмĕшле мобилизацийĕ çинчен (çынсене тата материалла пурлăхсене мобилизацилесси çинчен) саккун йышăннă. Çĕршывра чĕртавар тата апат-çимĕç çитменни питĕ çивĕччĕн палăрать. Йапони правительстви туса пыракан чрезвычайлă ĕçсем çĕршывăн економикине йăварлатассĕ, ĕçсыннисен унсăр та тӳсме çук йăвăр пурнăç условийĕсене тата ытларах начарлатассĕ. Вăрахурахла вăрçă çĕршывăн пур ресурсисене те çăтса йарать.

Снарйадсем, хĕçпăшалсем, çар хатĕрĕсем тăвасси ӳссе пырать. Хутмали йапаласем, нефть, металл пĕтни хăвăрт ӳссе пырассĕ. Йут çĕршывсенчен стратегилĕ чĕртаварсем кӳрсе килесси уйрăмăнах ӳссе кайнă, çав вăхăтрах çăмăл промышленнăç валĕçи кирлĕ чĕртаварсем кӳрсе килесси нумай чакнă. Йапони 1936 çулăн пĕррремĕш çурçулĕнче ытти çĕршывсенчен руда тата металл 217 мĕлйун иенлăх, нефть 96 мĕлйун иенлăх кӳрсе килнĕ пулсан, иртнĕ çулхи пĕррремĕш çурçулта руда тата металл 355 мĕлйун иенлăх, нефть 132 мĕлйун иенлăх кӳрсе килнĕ. Иккĕмĕш çурçулта çав продукцисене кӳрсе килесси уйрăмăнах ӳссе кайнă—руда тата металл кӳрсе килесси 546 мĕлйун иена, нефть кӳрсе килесси—166 мĕлйун иена çитнĕ. Çав вăхăтрах çĕрмамăкĕ кӳрсе килесси 398 мĕлйун иенран 220 мĕлйун иена çити чакнă. 1938 çулăн малтанхи уйăхĕсенче, 1937 çулхипе танлаштарсан, çĕрмамăкĕ кӳрсе килесси пилĕк хут, çăм кӳрсе килесси—тăхăр хут чакнă. Йапони таварĕсене бойкот тунипе, йут çĕршывсенче вĕсем сахал сутăннипе тата чĕртавар çитменнипе çăмăл промышленнăçра производствăла пултаруллăхĕн çурри чухлĕ çеç усă кураççĕ. Йут çĕршывсене пусма-тавар сутасси чакса пырать. Çăмăл промышленнăççенчен рабочисене нумайĕшне урама кăларса йанă. Ĕç тупмашкăн вĕсен нимĕнле шанчăк та çук.

Çар валĕçи кирлĕ йапаласем тăвассипе çыхăнса тăракан йăвăр промышленнăç валĕçи капитал хывасси йулашки çулсенче палăрмалах ӳснĕ. Авиаци, автомобил, суднăсем тăвакан, металлурги тата хими промышленнăçĕсен пысăкĕшĕ чылай ӳснĕ. Анчах та йăвăр промышленнăç продукцийĕсен ӳсĕмĕ капитал хывнин пысăкĕшĕпе нимĕн чухлĕ те шайлашаймасть. 1937 çулта машинсем тăвакан отраçĕл тăрăх продукци ӳсĕмĕ 1936 çулхи чухлĕ çеç пулнă тата 1935 çулхи ӳсĕмрен кайарах пулнă. Йапонире вăрçă валĕçи кирлĕ йапаласем тăратас ĕç йапăх пырать. Йапони промышленнăçĕ çарпа флотăн халĕхи вăхăтра ӳссе кайнă ыйтăвĕсене татса пама пултараймасть. Самолетсене, моторсене, хĕçпăшалсене, çавăн пекех тата стратегилĕ вырăн йышăнса тăракан чĕртаварсене Йапони йут çĕршывсенчен кӳрсе килет. Вăрçă ĕçĕсем валĕçи кирлĕ йапаласем çитменни Йапоние питĕ çивĕч туйăнтарать. Нефть кăларассипе вăл кирли хушшинчи уйрăмлăх ӳссе пырать. Çулсеренех 350 пин тонна нефть кăларса, Йапони мирлĕ вăхăтра 3—3,5 мĕлйун тонна нефть тăкакланă. Вăрçă çав тăкаксене тата нумай ӳстерчĕ. Хура металлурги производстви йулашки çулсенче палăрмалах ӳснĕ пулин те, Йапонин вăрçа пула ӳссе кайнă металл ыйтуне çапах татса параймасть. Металлпа усă курма питĕ çирĕп виçе тунă.

Çапла ентĕ Йапони промышленнăçĕн пултаруллăхне питĕ пĕчĕккĕ, унăн економикăлă ресурсĕсем тӳсме çук хĕсĕнсе çитнĕ.

Финанс ыйтăвĕ Йапонире уйрăмăнах çивĕч тăрать, вăл Йапони империализмĕн йăлăнах тăлласа тăракан вырăн пулнă. Китайа хирĕç вăрăха тăсăлакан вăрçă пуçланса кайни çак тăкаксене питĕ нумай ӳстерсе йачĕ. Вăрçă ĕçĕсем валĕçи 1936—37 çула валĕçи 4 мĕлйард иен панă пулнă, 1937—38 çула валĕçи 5,5 мĕлйард иен панă. Çак суммăсене Йапони государстви парăмĕсене ӳстерсе йанипе, займсем кăларса, вĕсене ирĕксĕрлесе сарса, çаплах тата хут укçасем нумай кăларнипе витеççĕ. Йапоние укçа хаксăрланни ытларан та ытларах хăруша формăсем йышăнать, вăл хăйĕн пĕтĕм йăварлăхĕпе çĕршывра ĕçхалăхне ĕнси çине ларать. Пĕр 1937 çулта кăна çӳрекен хут укçасен хисепĕ 25 процент ӳснĕ.

Йапонире йалти арçынсенчен пĕр мĕлйун çын вăрçа илсе кайнă (пĕтĕм Йапони тăрăх вăрçа мобилизациленисен хисепĕ пĕрре çурă—иккĕ мĕлйун çын шутланать). Йапони йалĕн çĕр ĕçлемелли инвентарĕ кивелсе çитнĕ, анчах металл çитменнипе вĕсене çĕнетсе тума май çук. Çаксем пĕтĕмпех рис пухса илессине чакараççĕ тата çимелли продукцисене йут çĕршывсенчен кӳрсе килмеле тăваççĕ. Анчах Йапони империализмĕн валютăпа йенĕ хĕсĕнсе çитнипе йут çĕршывсенчен кӳрсе килесси те йăварланса пырать. Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенче економикăлă кризис пулнă пирки Йапони йут çĕршывсене пурçăн-чĕртавар сутасси уйрăмăнах чакрĕ. Çак çулхи 100 кун хушшинче йут çĕршывсене пурçăн сутасси 758 мĕлйун иена çити чакнă, иртнĕ çул çак вăхăт хушшинче 910 мĕлйун иенлăх сутнă пулнă. Йапони йалхуçалăхĕн йут çĕршывсене тавар сутмали чи пысăк статйи вăл—пурçăн-чĕртаварĕ пулса тăрать.

Йапонири ĕççыннисен пурнăçĕ вăрçа пула ытларах йăварланса тата тĕксĕмленсе пырать. Йапонири хапрăксемпе савăтсенчи ĕç условийĕ катăргăри пек пулнине пурçĕрте те пĕлеççĕ. Нумайах пулмасть, Лига наци çумĕнчи Ĕçĕн Пĕтĕм Тĕнчери Бӳровĕ те унти ĕç условийĕсем начаррине палăртса, Йапонири кăмрăк, металлурги т. ыт. предприйатисенче те ĕçкунĕн тăршшĕ 12—14 сехет тесе кăтартса хăварнăччĕ. Ĕçукçи вĕсен пĕрмайах чакса пырать.

Çĕршывра фашисла террор темле тискер пулсан та, вăрçăпа тата вĕçĕмсĕр хĕнхурпа ывăнса çитнĕ халăх массисем выçлăх тата вăрçă режимĕсене ытларах хирĕç тăраççĕ. Китайа хирĕç пыракан вăрçа вăраха тăсăлни, Йапони çарĕсен фронтсенче пулакан ăнăçусăрлăхĕсем Йапони влаçĕнче пуç пулса тăракан ушкăнсем хушшинчи хирĕçӳсемпе кĕрешӳсене вăйлатаççĕ тата Йапони империализмĕ пĕтсе ларасси патне илсе пыраççĕ.

Гальперин.

Портсмутра тунă договăра Йапони çĕнĕрен пăснă

Майăн 31-мĕшĕнче Лаперуз проливĕнче Йапони çыранĕсем çывăхĕнче Главрыбăн рефрижераторĕ 1-мĕш номĕрлĕ пăрахучĕ ăшăх çĕре кĕрсе ларнă. Пĕтĕм тĕнчери халăхсен пĕр-пĕрин хушшинчи хутшăнăвĕсенче йышăннă тăрăх çав пăрахута пулăшу парас вырăнне, Йапони влаçĕсем пăрахута арестленĕ те, вăл пăрахут кĕме йураман вырăна кĕрсе кайнă тесе, пăрахут çинчи капитана тĕрмене хупса лартнă. Пирĕн пăрахутпа унăн капитанне арестлени Портсмутра тунă договăрăн 9-мĕш статйине тӳрренех пăсни пулать. (1905 çулта Америкăри Портсмут хулинче Российăпа Йапони хушшинче тунă договăр). Договăрăн çав статйи Йапонине çав проливăн çыранĕсем патĕнче мĕнле те пулин çар укрепленисем тата çар обйекчĕсем тума чарать, кунсăр пуçне тата Йапони правительствине пăрахутсем проливра ирĕккĕн çӳрес çĕрте нимĕнле чарусем те тума хушмасть.

(ТАСС).

Пĕр-ик сăмах „Хатĕр пул" çинчен

Кăçал „Хатĕр пул" журнал тухма пуçлани 10 çул тултарчĕ. Анчах, вулакансем хăйсен журналĕ 10 çул тултарнине нимĕн сисмесĕрех йулчĕç. Çутĕç Халăх Комиссариачĕпе ПСÇЛКС Чăваш Обкомĕ те шарламарĕç.

Паллах, журнал хăй тухма пуçланăранпа пирĕн совет шкулĕнче вĕренекенсемпе пионерсене коммунисла воспитани парас ĕçре пайтах пысăк ĕçсем турĕ. Анчах журналăн пахалăхĕ çак 2—3 çул хушшинче начарланса пынине пирĕн çамрăк вулакансем умĕнче нийепле те пытарма май çук.

Пирĕн умра журналăн кăçалхи (1938 ç.) номĕрĕсемпе пĕлтĕр (1937 ç.) тухнă номĕрсен комплекчĕ. Пур номĕрсене те тĕплĕн вуласа, тишкерсе тухнă хыççăн, тӳрех çакна каламала: „Хатĕр пул" журнал хăйĕн çамрăк вулакансем умне, вĕсене куллен интереслентерекен ыйтусене нимĕн чухлĕ те кăларса тăратма пултарайман. Нумай чухне ачасене валĕçи çырнă публистикăлă материалсем çине чăтма çук çиелтен пăхнă. Кун çинчен журналăн кăçалхи апрел уйăхĕнче тухнă номĕрĕ питĕ аван кăтартса парать.

Пирĕн шутпа журналăн апрел уйăхĕнче тухнă номĕрĕнче, тĕпрен илсен, союзлă тата автономлă республиксен Верховнăй Совечĕсене суйлама хатĕрленессипе папанинла епопейăна çутатса памала пулнă. Мĕншĕн тесен, апрел уйăхĕнче тухакан журнал вулакансем патне июнь уйăхĕн малтанхи кунĕсенче тин çитнĕ.

Анчах журнал редакцийĕ çак икĕ пысăк событисем çинчен нумай пинлĕ çамрăк вулакансене каласа пама шутламан та. Çакăн вырăнне вăл журнал хуплашкин иккĕмĕш страницинче РСФСР Тĕпĕçтăвком тата Чăваш АССР Тĕпĕçтăвком президиумĕсем суйлав кунĕ çинчен йышăннă постановленисене пичетленипе иртерсе йанă.

Редакци çакнашкал пысăк документсене пичетлеме урăхла майсем тупайман.

Журналăн 6-мĕш страницинче Совет Союз геройĕсен—Папанинсен геройсăмлă историлĕ ĕçĕсене çутатса панă. Анчах мĕнле? Шупашкарти шкулсенчен пĕринче, 5-мĕш „А" класра вĕренекен ачасен пĕр пĕчĕк заметкине пичетленĕ те пĕтĕм епопейĕ пулса тăнă. Çитменнине тата хăш шкулти ачасем çырнине те кăтартман редакци.

Папанинла епопейă çамрăк ачасене мĕн таран интереслентерни, пирĕн телейлĕ çĕршыври совет ачисем геройсен ĕçĕсем çинчен пĕлтерсе пынисене мĕн чухлĕ хумханса кĕтсе тăни кашни çыннăнах паллă. Тӳрринех тӳрех калама тивет: „Хатĕр пул" журнала вулакан шкул ачисемпе пионерсем кун çинчен вĕсен журналĕ çырнинчен темиçе хут ытларах нумай пĕлеççĕ.

Пирĕн журнал редакцинчен çакна ыйтас килет: Папанинсем çинчен мĕнле те пулин интереслĕ, пĕчĕк калав йе очĕрк хатĕрлеме май килмен-ши вара? Папанинпа Кренкĕл дневникĕсенчен мĕнле те пулин сыпăксем илсе пичетлеме май пулман-и? Мĕншĕн ачасене „Çурçĕр Полюс" станци куçса çӳренине лайăх кăтартмала пулман? Совет експедицийĕ пĕтĕм тĕнчери ăслăлăхшăн пысăк вклад пулни çинчен мĕншĕн çырса кăтартмала мар пулнă ачасене?

Журнал редакцийĕн пирĕн совет ачисене политикăлă çивĕч ыйтусем интереслентернине, вĕсене шкулпа пионер организацинчи хаваслă пурнăç кăмăла килнине, вĕсен çемйери тата шкулти кашни куленхи вĕресе тăракан пурнăçне нихăçан та манма йурамасть.

Çак ыйтусене журналта пачах тĕл пулма çук, вăл ыйтусене çутатсассăн та, мăка чĕлхепе, типĕ сăмахсемпе çеç çырса пыраççĕ.

Йулашкинчен журнал чĕлхипе ăна йĕркелесси çинчен, журналти материалсене майласа вырнаçтарасси çинчен.

Акă, 4-мĕш №-ре илсессĕн те, унта пичетленнĕ материалсенче орфографипе пунктуаци йăнăшĕсем, тĕрĕс мар сăмах çаврăнăшĕсем, ачасене ăнланмала мар сăмахсем темĕн чухлех. Пуринчен ытла ку йенчен „Икĕ упа" йумах (13 стр.), Арк. Нестерĕв çырнă „Етемлĕх чечекĕсем" очĕрк (9-10 стр.), М. Пахчаç çырнă „Кӳлĕ хĕринче" калав (16-24 стр.) паллă пулса тăраççĕ. Çак асăннă йапаласенче ачасене ăнланмала мар сăмахсем туллийех. Акă, „йанкăс", „ăшалук", „çуршарĕш", „кăсем", „вăлтана кайнă" (пулă тытма кайнă тес вырăнне пулмала!) йеверлĕ сăмахсем час-часах тĕл пулаççĕ.

Пĕр сăмахпа каласан, журнал чĕлхе тасалăхĕшĕн, культурлă чĕлхешĕн тăрăшмасть.

Редакцин астăвас пулать: пуринчен ытларах ача-пăча журналĕ грамматикă тĕлĕшĕнчен тĕрĕс, йака, илемлĕ чĕлхепе тухмала.

Журнала йĕркелĕ, илемлĕ кăларасси, унта материалсене вырнаçтарасси пирки калаçмали те çук. Шкулсенче алпа çырса кăларакан журналсем темиçе хут илемлĕрех, пахарах тухаççĕ.

Акă, каллех 4-мĕш №-рех илер: 2-ш страницăна Ленă шывĕ çинчи событи çинчен çырнă. 3—5 страницăсенче В. Майаковски çинчен çырнă, 3-мĕш страницăра пĕр илемсĕр, тĕксĕм, ачасем палламала мар клишене вырнаçтарнă. Те Майаковски, те такам—паллă мар. Мĕн пурĕ те клише айĕнче çырнине вуласан çеç кам иккенне пĕлме пулать.

Ахалтен мар ĕнтĕ, республикăра темиçе çĕр пин шкул ачисемпе пионерсем пур чухне журналăн тиражĕ 1000—1700 екземплйар çеç. Çакна аса илмеле пулнă редакцин. „Хатĕр пул" журнал пирĕн республикăра чи массăлă, нумай пинлĕ тиражпа тухакан журналсенчен пĕри пулмала.

„Хатĕр пул" журнала аванлатасси ПСÇЛКС Чăваш Обкомĕпе Çутĕç Халăх Комиссариачĕн тата Чăваш полиграфтрестĕн ĕçĕ.

Михаил Йурйĕв.

Тĕне хирĕçле куçса çӳрекен художĕствăлă выставкă

Вăрçăла турăсăрсен Союзĕн Чăвашсовечĕ тĕне хирĕçле куçса çӳрекен художĕствăлă выставкă организацилерĕ. Выставкăн задачĕ—тĕн ăçтан пуçланса кайни тата унăн революцине хирĕçле ĕçĕсем çинчен çутатса парасси. Тĕллевпе задачисем тăрăх выставкăна 14 пайа уйăрнă. Пайсем тĕрлĕ темăсене çутатаççĕ. 1-мĕш темă—тĕн пуçланни, II-мĕш—христос тĕнĕ, III-мĕшĕ—çектанствăпа ислам, IV-мĕш—киремет, V-мĕш—патшапа чиркӳн колонизатăрла политикĕ, VI-мĕш—чиркӳ патша службинче, VII-мĕш—фашисăмпа чиркӳ, VIII-мĕш—тĕн халăх наркăмăшĕ, IX-мĕш—маркçисăм-ленинисăм тата тĕн, X-мĕш—ăслăлăхпа тĕн тата тĕнче пуçланни, XI-мĕш—ăслăлăхпа тĕн тата çутçанталăкри йавленисем, XII-мĕш—Октябĕр революци тата тĕн, XIII-мĕш—Сталинла Конституци тата тĕне хирĕçле пропагандăн задачисем, XIV-мĕш—тĕне хирĕçле литературă. Çак тĕне хирĕçле темăсемпе паллаштарма 26 картонлă листасем çине 408 картинкăпа ăнлантарулă текст тата 21 тĕне хирĕçле лозунг çыпăçтарнă.

Выставкă РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлас умĕн, ийунĕн 24-мĕшĕнче, Шупашкарти 10-мĕш суйлав участкин пӳлĕмĕнче (Пичет çурчĕ) ĕçлеме пуçларĕ. Виçĕ кун хушшинче выставкăна пурĕ 472 çын пырса курчĕ. Вĕсене ВТС Совечĕн инструктăрĕсем ăнлантарса тăчĕç. Ийунĕн 26-мĕшĕнче, кăçхине спектакль хыççăн чиркӳн революцине хирĕçле ĕçĕсем тата тĕне хирĕçле выставкăн задачисем çинчен калаçу пулса иртрĕ.

Выставкă курма пынă çынсене кăмăла кайрĕ. Выставкăна организаленине тата ун темисемпе експоначĕсене ырларĕç, выставкăн çитменлĕхĕсене кăтартса вырнаçулă сĕнӳсем парса хăварчĕç. Курма пыракансем фашисăмпа тĕн, Октябĕр революципе тĕн тата Сталинла Конституципе тĕн ыйтăвĕсем çинчен çутатакан темăсемпе ытларах интересленчĕç.

Выставкă Пичет çуртĕнчен Шупашкарти Строителсен клубне, Хресчен çуртне тата Çпиртсавăта куçать, унтан районсене çӳреме пуçлать, кашни вырăнта 4—5 кун пулать.

ВТС, парти, профсойуз, комсомол, совет т. ыт. оргăнсен тĕне хирĕçле пропагандăна вăйлатас, ĕненекенсене тĕн сийенĕ çинчен ăнлантарас ĕçре выставкăла пысăк усă курмала. ВТС Чăвашсоветне выставкăна вырăнтан вырăна куçарма пулăшмала. Выставкăна пырса курма тата выставкăра пулса иртекен тĕне хирĕçле калаçусене итлеме ВТС членĕсене, рабочисене, колхозниксене, йединоличниксене, служăщчисене тата вĕренекенсене коллективлă екскурçисене сарлакан йавăçтармала.

Тимофейĕв.

Вĕренме 725 студент илмеле

Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче Шупашкарти рабфаксене, техникумсене тата акушерсен шкулне вăтам шкулсемсĕр пуçне, 725 студент вĕренме илмеле.

Ийунĕн 28-мĕшне техникумсемпе рабфаксене вĕренме кĕме 150 ыйту килнĕ.

А. Николайĕв.

Савăтăн çак кунсенчи ĕçĕсем

ÇĔМĔРЛЕ. „Большевик" савăт коллективĕ РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйланă кун çĕнĕ ӳсĕм турĕ. Савăт вăл кун плана 110,5 процент тултарчĕ. Тараканăв йулташ йертсе пыракан 4-мĕш бригада плана 121,1 процент тултарса ытти бригадăсенчен мала тухрĕ. Стоцкий йулташ бригади те плана 113,5 процент тултарчĕ.

Савăтри рабочисем тунă ситĕнĕве çирĕплетсе малашне татах та лайăхрах ĕçлеме пулаççĕ. Йермаков, Федарăв, Горбунов, Йакавлĕв т. ыт. стаханăвĕцсем йулашки кунсенче кулленхи нормăна 140 процентран кайа мар тултарса пыраççĕ.

П. Иваницкий.

Çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленме тытăнман

Телейлĕ çĕршывра ӳсекен çамрăк ачасене çителĕклĕ пĕлӳ парас тесен, шкулсен çĕнĕ вĕренӳ çулне халех хатĕрленмеле.

Шупашкар районĕнчи чылай шкулсем çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленме ку таранччен те тытăнмасăр тăраççĕ. Уйрăмăнах шкул валĕçи вутă хатĕрлесе турттарасси, шкулсене йусасси тата вĕренӳре кирлĕ учебниксемпе пособисене илсе хатĕрлес ĕç йапăх тăрать.

Тулик Хураскинчи вăтам шкулăн çĕнĕ вĕренӳ çулĕ валĕçи 300 кубла метр вутă хатĕрлесе кӳмелĕ, çĕнĕрен 50 парта илмелĕ, вĕренӳре кирлĕ хатĕрсене 8 пин тенкĕлĕх илсе хатĕрлемеле. Пайанхи куна шкул (директăрĕ Сергейĕв) нимĕн те туман.

Çавăн пекех Лапсар Çатрари туллимар вăтам шкул, Чăрăшкассинчи пуçламĕш шкул çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленме тытăнман-ха.

Тренкассинчи пуçламĕш шкулăн партăсемпе доскасене йусаттармала. Анчах Хыркасси йалсовет председателĕ Тимофейĕв йулташ „укçа çук" тесе шкула партăсемпе доскасене йусама укçа-тенкĕ памасăр тăрать.

Çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрленес ĕçпе райçутĕç пайĕ те интересленмест.

Г. Петров.

Машинсене ахаль лартаççĕ

Вăрнар вăрманпромхозĕ иккĕмĕш квартăлта та йапăх ĕçлерĕ. Анчах вăрманпромхоз руководителĕсем тимлесе ĕçлеме тытăнас вырăнне, айăпа колхозсемпе районсем çине йăвантарнипе лăпланса лараççĕ, плана тултарманни хăйсенчен килнине мансах кайаççĕ.

Çаракăлри автоçул çинче пурĕ 11 автомашинă пур. Пур машинĕсемпе те усă курсан кăçнă йăвăçсене вăхăтра турттарса кăларма май пур. Анчах кунта 5 автомашинă çеç ĕçлет. 6 машинă кăçал çава тухнăранпах гаражра лараççĕ. Хăшĕсем йурăхсăра тухнă, теприсен пайĕсем çухалса пĕтнĕ. Рабочисем çителĕксĕр пирки çӳрекен машинсем те час-часах ахаль тăраççĕ. Ийунĕн 11-мĕшĕнче ирхине шофĕр-стаханăвĕц Николайĕв йулташ пушатакансем пулман пирки икĕ сехете йахăн ахаль тăнă.

Вăрманпромхоз директăрĕ Сазонăв йулташ çаксем çинчен пĕлет пулин те нимĕн те тумасть. Çитменлĕхсем çинчен каласан вăл вăрçма пикенет.

Н.

С у д

Ачине вĕлернĕшĕн

ТРАК. Итмар йалсоветне кĕрекен Çырмапуç йалĕнчи Йеленă Гурйĕвă кăçалхи йанвар уйăхĕнче ача çуратнă. Ача çуратнине çынсене пĕлтерес мар тесе, вăл ачана пăвса вĕлернĕ те, пĕр уйăх хушши тутăрпа чĕркесе тулта усранă.

Çак тискĕр ĕçе йалсовет председателĕ сиссе, милицине пĕлтернĕ. Тĕрĕслесен, Гурйĕвă хăйĕн ачине чăнах та вĕлернине палăртнă.

Трак районĕнчи халăх сучĕ ийунĕн 22-мĕшĕнче Чатукасси йалне пырса, Гурйĕвă ĕçне судăн уçă ларăвĕнче пăхса тухрĕ. Суд Йеленă Гурйĕвăна 10 çул хушши хупса усрамала тата 2 çул суйлав прависĕр хăвармала турĕ.

Н. Куçмин.

Кийĕвра музыкă училищ…
нирен килнĕ 14 ача вĕренеç…
УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Пионер…
Лопес музыкă урокĕнче, …
А. И. Склавокскайа вĕрентет…
(Сойу…

Спорт хроник…

** Мускав команди Шу… ра килет. Ийулĕн малтанхи… сенче Шупашкара „Родина" общĕствин (Мускав хули) фут… мастăрĕсен команди килет. Ку команда футбол вăййипе ССР Со… йузĕнче малти вырăна тухассишĕ… 1-мĕш группăра выляна. „Родина" общĕствин футболисĕсем Шупашкарти „Спартак" общĕстви… командипе тата хулари сборнă командăпа тĕл пулса вылямала.

** Шупашкар - Симферопол… „Темп" спорт общĕстви йенĕпе ССР Союзĕнчи малти вырăнша… Симферополь хулинчи командăп… Шупашкар хули командисем хуш… шинче пулнă вăйăра Симферопол… команди Шупашкар командин… 2:0 шутпа çĕнтернĕ.

** Совет ишевçисей çĕнтерĕвĕ. Францири рабочисен спор… федерацийĕ 30 çул тултарнă уйав… пухăннисен шывра ишекенсен ăмăр… тăвĕ пулнă. 100 метр ишессипе Совет спортсменки Клавдийа Альошина пĕрремĕш вырăна тухнă… Арçынсен 200 метр ишсе тухмал… пулнă. Кунта та совет спортсмен… Çемен Бойченко пĕрремĕш выр… на йышăннă. Франци хаçачĕсе… Совет спортсменĕсене мухтас… статйасем пичетлесе кăларнă.

** „Торпедо"—„Аиф" 6:0. Ийу… нĕн 26-мĕшĕнче Парижри (Франци… „Першинг" стадионĕнче Франци… рабочисен спорт организацийĕ … çул тултарнă йатпа организациле… нĕ уйăври футбол вăййипе малт… вырăна тухассишĕн финаллă мат… пулнă. Финалра Мускаври Сталин йачĕпе тăракан автосавăтри „Торпедо" тата Норвегири рабочисен „Аиф" спорт общĕствин командисем тухнă. Вăйăра „Торпедо" ко… манди „Аиф" командă алăкне… мечкă тапса кĕртнĕ. „Аиф" фу… болисĕсем Мускав командин алă… не пĕр мечкă та тапса кĕртеймен.

** Пайан стадионра. Шупаш… карти „Темп" общĕствин стади… онĕнче „Динамо" тата „Буревес… ник" футбол командисем выляç… çĕ. Унччĕнхи вăйăра икĕ команд… те „Спартак" общĕствин футб… лисĕсене илсе тухнă. Ку вăйăр… хăйсен составĕсем çеç пулаççĕ.

Пулни-иртнисем

ÇЫН ВИЛЛИ ТУПНĂ. Кăçал… ийунĕн 6-мĕшĕнче Канаш вăрм… хуçалăхĕн Сиккасси дачин вăрм… нĕнче Ваçили Никифăрăвич Волк… ӳтне тупнă. Вăл Инел йалĕнче (П… тăрйел р.) 1922 çулта çуралнă ça… рăк пулнă, килĕнчен майăн 31-м… шĕнче ашшĕсене пĕлтермесĕр… тухса кайнă.

Врачсем палăртнă тăрăх, Волкă… ва çивчĕ йапалапа пуçран çап… вĕлернĕ. Тĕрĕслесен çакна палăрт… нă: майăн 31-мĕшĕнче вăрмант… пушăт каснăшăн, Волкăва Сиккас… си дачинчи 73-мĕш обходри ле… ник Алексей Дмитрийĕв вĕлерв… пулнă.

Дмитрийĕв леçнике арĕслен… Ĕçе малала тĕрĕслеççĕ.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНĂВ.

Учителсен институчĕшĕн

екстерн йĕркипе харпăрхăй тĕллĕн вĕренекенсен пур факультетсен те

çулахи итоглă çеççийĕ

1938 çулта ийулĕн 1-мĕшĕнчен пуçлас… августăн 1-мĕшчен пулать.

Çеççийе килнĕ чух вĕренӳ материалĕ… сем, простыньсемпе çытар пичĕсем тата… паспарт илсе килмеле.

2—2

Чăваш АССР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕ вата врач, медицина ăслăлăхĕн доктăрĕ

КОНСТАНТИН ВАÇИЛЙĔВИЧ ВОЛКĂВ

чирленĕ хыççăн кăçалхи ийунĕн 28-мĕшĕнче вилни çинчен хурланса пĕлтерет, тата унăн çемйине пĕрле куляннине çинчен калать.

Чăваш АССР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 322

Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 500.